## Андриян Николаева халалласа Шуршăлта Туслăх аллейи уçăлнă ● 2 стр.


*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр... Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*


ХЫПАР

1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# Чăваш ХĔРАРĂМĔ

37(907) №, 2015, сентябрь/авăн, 19

Хакĕ ирĕклĕ. 16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.


ÇĂЛТĂР ÇŸПÇИ

## Пурнăç малалла



Василий РАЙМОВ, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ

– Искусствăна ура ярса пуснăранпа 40 çул çитрĕ. Вĕсенчен 30 çулне Чăваш патшалăх юрăпа ташă ансамблĕнче юрласа ирттертĕм. 54 çулта тивĕçлĕ канăва тухрăм. Малтанах питĕ йывăр пулчĕ – ара, ĕçе çÿреме хăнăхнă-çке, кунсерен – репетици, концерт, гастроль... Ыйхă вĕçрĕ, чунпа ансамбльтехчĕ, тĕлĕкре те репетицисемпех аташаттăм.

Вăхăт иртрĕ, лăплантăм. Малтанах, ĕçленĕ чухнех, ĕмĕтленнине, палăртнине пурнăçларăм – "Хунав" ушкăн йĕркелерĕм. Фольклорпа эстрада ушкăнĕ вăл. Çак юхăма аталантарас кăмăл малтанах çуралнăччĕ – ăрусен çыхăнăвне йĕркелес килетчĕ. Халĕ мĕнле пулса тухать-ха? Аслă ăру халăх юррисене кăмăллать, çамрăксем вара вĕсене питех итлесе каймаççĕ, эстрада енне туртăнаççĕ. Халăх пултарулăхне вара епле пулсан та упраса хăварас килет. Хам ку енĕпе тахçанах ĕçлеме пуçланăччĕ-ха, халĕ вара çак тĕллеве ушкăнпа пурнăçлатпăр – çамрăк тата аслă ăрăва пĕрлештерекен юрăсене итлекен-куракан патне çитерме тăрăшатпăр, халăх юррисене эстрадăпа хутăштаратпăр. Муркаш районĕнчи Ярапайкассинчи Виталий Романовпа 40 ытла юрă çыртăмăр. Ушкăнра ытларах – çамрăксем. Ку вĕсене пулăшас тенипе çыхăннă. Вĕсене пĕрремĕш утăмсене тума пĕрре те çăмăл мар. Хамăн концертсене йĕркеленĕ чухне те корифейсемпе пĕрлех сцена çине çамрăксене кăларма тăрăшаттăм.

Ĕмĕрĕпех искусствăра ĕçленĕ май чăваш эстради аталанăвне сăнатăп паллах. Халĕ çÿллĕ шая çĕкленчĕ вăл. Чăн та, ырламалли те, хурламалли те пур. Ман хăлхана, сăмахран, "çăлтăр" тени çурать. Пирĕн вăхăтра апла ăнлав пулман та. Мана "çăлтăр" тени, сăмахран, хамран кулнăнах туйăнать. Хăшне-пĕрне вара, калăпăр, çынсем палламаççĕ те, пĕр е икĕ юрăпа тухнă та халăх умне, çитменнине, ячĕ-шывĕ те, юрри те асра çук – ун пирки вара "çăлтăр" тесе пĕлтереççĕ. Хăйсем: "Çăлтăрсем çÿлте, тÿпере", – теме пăхаççĕ-ха та ĕнтĕ... Кунта, тен, концертсене ертсе пыракансен айăпĕ те пур-тăр, çапах та кăшт сăпайлăрах пулма сĕнес килет.

Çавăн пекех хăйсем çыракан, кĕвĕлекен, юрлакан юрăсен пахалăхĕ те иккĕленÿ çуратать. Юлашки вăхăтра халăхра анлă сарăлнă юрăсене чăвашлатса юрласси модăна кĕрсе пырать. "Хам çыртăм", – теççĕ. Анчах итлетĕн те – кĕвви палланăскерех. Йĕркеллĕ-и вара ку? Кашни юррăн хăйĕн авторĕ пур-çке. Уйрăмах Кавказ тăрăхĕнчи юрă-кĕвве хамăрлатма тăрăшни сисĕнет.

Ытти енчен... Ытти енчен пурте йĕркеллех. Малтанах чун ырататчĕ, халĕ тивĕçлĕ канура пулсан та пĕр вăхăт та çук. Таçта та çитмелле, темĕн те тумалла. Халĕ тата савăнтарчĕç-ха: тăваттăмĕш хутчен кукаçи ятне илтрĕм. Пурнăç малалла...


● Статья вăррисем Ваççаран Наççа туса хунă 3 стр.

●Чăваш илемĕ кĕпĕрнаттăрсене те тыткăнланă 5 стр.

●Исĕм çырли тĕммине лартма пĕлмелле 8 стр.

● Çемьери пусмăра тÿссе пурăнмалла мар 9 стр.

●Мĕн чухлĕ тăшман ман, мĕн чухлĕ юлташ!.. 10 стр.




М. ТУМАЛАНОВА сăнÿкерчĕкĕсем.

4 стр.

## Патша сачĕ майлах

**ЧР строительство, архитектура тата çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх министерстви çулленех республикăри чи хăтлă та симĕс вырăна палăртас тĕллевпе конкурс ирттерет. Кăçал жюри членĕсем 46 ĕçе пăхса тухнă. Конкурса Куславкка районĕ, Канаш, Шупашкар хулисем хастар хутшăннине асăнса хăварас килет. Çав вăхăтрах Сĕнтĕрвăрри, Муркаш, Шупашкар, Çĕмĕрле, Тăвай районĕсем, Çĕнĕ Шупашкар хули айккинче юлнă – конкурса пĕр ĕç те ярса паман.**

**Çĕнтерÿçĕсене 5 номинаципе палăртнă. Мала тухнисене хавхалантармашкăн республика хыснинчен 582,6 пин тенкĕ уйăрнă. Куславкка районĕнчи Энтри Пасарĕнчи Петровсен хуçалăхĕ, тĕслĕхрен, кил таврашне илемлетес тĕлĕшпе пĕрремĕш вырăн йышăннă.**

**Конкурс пĕтĕмлетĕвĕпе паллашсанах çак тăрăха çитсе килме шухăш çуралчĕ. Мĕнпе уйрăлса тăрать-ши Петровсен хуçалăхĕ?**

Атьăр апла – кĕрсе курар. Надежда Никоновна каланă тăрăх, ку лаптăка 3 çулта йĕркене кĕртнĕ. Малтан çакăнта çырма пулнă, çум курăкĕ ашкăрнă. Петровсем тăрăшнипе вара тавралăх паламалла мар улшăннă. Мана патшасен садне аса илтерчĕ çак вырăн. Улмаçырла йывăççисем çимĕç пама пуçланă. Чечек тĕсĕсене шутласа та кăлараймăн.

Хапхаран кĕрсенех талпиçен вырăн тупнă. Ăна та ятарласах лартман – хăех шăтса тухнă.

### ÇАНТАЛĂК

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 19.09 | + 20 | + 15 |
| 20.09 | + 18 | + 14 |
| 21.09 | + 18 | + 11 |
| 22.09 | + 23 | + 13 |
| 23.09 | + 22 | + 12 |
| 24.09 | + 16 | + 12 |
| 25.09 | + 14 | + 12 |


ÇЫРĂНТАРУ 2016

«Хыпара» – кашни çемьене!

Сентябрĕн 1-мĕшĕнчен Раççей почтин мĕнпур уйрăмĕнче «Хыпар» Издательство çурчĕн хаçат-журналне 2016 çулăн I çурринче илсе тăмашкăн çырăнтараççĕ:

«ХЫПАР» 625,62 тенкĕ, çырăнтару индексĕ – 54800.

«ХЫПАР» – эрнекун» 325,92 тенкĕ, çырăнтару индексĕ – 78353.

«ЧĂВАШ ХĔРАРĂМĔ» – 343,8 тенкĕ, çырăнтару индексĕ – 11515.






А.Г.Николаевăн Шупашкарти палăкĕ умĕнче Мускавран килнĕ хăнасем – Совет Союзĕн икĕ хут Геройĕсем Виктор Горбаткопа Виктор Савиных – хăйсен çывăх тусĕ пулнă чăваш Кăйкăрне ăшшăн аса илчĕç. «Паянхине шутласан эпĕ Чăваш Енре – 25-мĕш хут. Мана Чăваш Ен, чăваш халăхĕ Андриян ятне, сăнарне еплерех упрани, асра тытни питĕ килĕшет. Маттурсем эсир! Тавтапуç сире!» – терĕ Виктор Васильевич Горбатко.

АНДРИЯН НИКОЛАЕВ ÇУРАЛНĂРАНПА – 86 ÇУЛ

# Медале тивĕçрĕç

Шуршăлти Космонавтика музейĕ умĕнче А.Г.Николаев çуралнăранпа 86 çул çитнине халалланă савăнăçлă митингра Совет Союзĕн икĕ хут Геройĕ Виктор Горбатко çав вăхăтра Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Михаил Игнатьева Раççей Космонавтика федерацийĕн «Дважды Герой Советского Союза, летчик-космонавт СССР Николаев Андриян Григорьевич» ылтăн медальне парса чысларĕ. «Эпĕ «чĕрĕ Андрияна» шкул ачи чухнех хам куçпа курнă, чăваш ачисемпе чăвашла шăкăл-шăкăл калаçнине илтнĕ. Андриян Григорьевич Николаев маншăн чи хаклă, чи хисеплĕ çынсенчен пĕри. Шуршăлти музее аталанма, Чăваш Енри çамрăк космонавтсен юхăмне сарăлма тата вăй илме май парас тĕлĕшпе хамран мĕн килнине пĕтĕмпех пурнăçа кĕртĕп», – хумханса та хавхаланса калаçрĕ митингра Михаил Васильевич. Çавăн пекех çак медале медицина наукисен докторĕ, Раççей Писательсен союзĕн членĕ Николай Григорьев, «Комплекс» строительство фирмин директорĕ, ЧР тава тивĕçлĕ строителĕ, паллă меценат Валерий Гордеев тата Чăваш халăх поэчĕ, «Хыпар» Издательство çурчĕн» директорĕ-тĕп редакторĕ Валери Туркай тивĕçрĕç.



В.КУЗЬМИН сăнӳкерчĕкĕсем.

**Елена АТАМАНОВА.**

# Туслăх аллейи

**СССР космонавт летчикĕн А.Г.Николаевăн мемориал комплексĕн паркĕ Туслăх аллейипе пуянланчĕ. Çакă – республика çыннисене çыхăнтаракан вырăн. Мĕншĕн çапла калатăп-ха? Туя йывăççисене шăпах ентешлĕх ертӳçисем, вĕсен çумĕсем лартса хăварнă. Малашне хунавсене хăйсемех пăхса тăрĕç.**

«Çакăнта ачасем экскурсие тăтăш килеççĕ. Паркра хăйсен район çынни лартнă йывăç пурри, паллах, вĕсен чунĕнче патриот туйăмĕ çуратать», – палăртать мемориал комплексĕн пуçлăхĕ Александр Тукмаков. Çак лаптăк çулсерен илемленсе пырĕ, курма пыракансене илĕртĕ.

Ку ĕçе, паллах, Сĕнтĕрвăрри ентешлĕхĕ тăрăшмасăр йĕркелеме май килмен. Юлашки çулсенчи унăн ĕçĕ уйрăмах курăмлă. 2013 çултанпа ентешлĕх тилхепине Андрей Кузнецов тытса пынине палăртса хăварас килет. Вăл район çыннисемпе çийĕнчех пĕр чĕлхе тупни куçкĕрет. Пĕлтĕр, тĕслĕхрен, Шупашкарта пысăк йышпа ентешлĕх уявĕ йĕркеленĕ. Унта кашни ял тăрăхĕн специалисчĕсене, культура ĕçченĕсене хутшăнтарнă, курав йĕркеленĕ.



В.КУЗЬМИН сăнӳкерчĕкĕ.

Кăçал Шуршăлта иртнерĕ конференци те Сĕнтĕрвăррисене пĕр ушкăна чăмăртанма пулăшнă. Район хастарĕсем кăна мар, аякран килнĕ хăнасем те тухса калаçнă унта.

«Манăн аттепе анне – Сĕнтĕрвăрри районĕнченех. Хăш-пĕрин çывăх çыннисем вара – тĕрлĕ тăрăхран. Сăмахран, яш урăх район хĕрне качча илнĕ тейĕпĕр. Çав вăхăтрах эпир пурте Чăваш Республикинче пурăнатпăр. Пирĕн пĕр-пĕрин хушшинчи туслăха çирĕплетме ăнтăлмалла, çавăнпах тăтăшрах тĕлпулмалла», – хавхаланса калаçать Андрей Геннадьевич. Ахальтен мар Сĕнтĕрвăрри тăрăхĕнче ентешлĕх ертӳçисемпе турслет йĕркелеме палăртнă вăл. Ку ĕмĕт çитес вăхăтрах пурнăçланĕ. Çак йышпа çулла Шупашкар районĕнче тĕлпулни те ахаль иртмен. Пĕр-пĕрин опычĕпе паллашнă, çивĕч ыйтусене хускатнă вĕсем.

«Туслăх аллейи йĕркелес шухăш Андриян Николаевăн асăну кунĕнче çуралчĕ. Ун чухне яланхи пекех Шуршăла халăх йышлă пуçтарăннăччĕ. Комсомольски ентешлĕх ертӳçипе Александр Капитоновпа, Чăваш халăх поэчĕпе Валери Туркайпа пĕрле сӳтсе яврăмăр çакна. Ентешлĕх йышĕнчи республика паллă çыннисем ку ĕçе хутшăнма кăмăл турĕç», – тет Андрей Кузнецов.

Республикăри 19 ентешлĕх лартнă туйăсем хăвăртах вăй илĕç, паркаланса çитĕнĕç. Сăмах май, Чăваш наци конгресĕн президентне Николай Угаслова Тутарстан ентешлĕх пуçлăхне çирĕплетнĕ. Çавăнпах вăл юнашар республика ячĕпе те хунав лартса хăварнă. Чăнах, туслăхăн чикки çук. Ăна нимĕнпе те виçеймĕн. Вăл малалла хăпартланса ĕçлеме капашсăр вăй парать.

Çав кунах Туслăх аллейине çамрăк мăшăр килсе çитнĕ. Туй кунĕнче шăпах çакăнта сăнӳкерĕннĕ. Ку пулăм ырă йăлана çаврăнасси халех паллă.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

КИЛ ĂШШИ

# Ачана çемьере лайăхрах

Муркаш районĕнче ачана усрава е опекăна илес тĕллевлĕ çемьесене сĕнӳ-канашпа пулăшас ĕç малалла пырать. Çак кунсенче А.Г.Николаев ячĕллĕ ача-пăча район библиотекинчи «Шанчăк» консультаципе методика центрĕнче иккĕмĕш тĕлпулу йĕркеленĕ. Унта ача аталанăвĕн тапхăрĕсене, федераци саккунĕсене пăхса тухнă. Çавна май тĕрлĕ тытăмри специалистсене сăмах панă.

И.Волкова педиатр ачасемпе пĕрле диспансеризаци тухмаллине, профилактика прививкисене вăхăтра тумаллине, сывлăх мероприятийĕсене хутшăнмаллине аса илтернĕ.

«Ача чи лайăх çурчĕ те çемьепе танлашаймасть. Пепкене хăвăр хӳтте илсе, паллах, ырă ĕç тăватăр», – тенĕ медицина психологĕ Л.Ярдыкова. Çавнашкалах çивĕч ыйтусен хуравне пĕрле шыранă, тĕрлĕ пулăма пăхса тухнă.

Социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕ В.Аникина ачаллă çемьесене тивĕçекен социаллă пулăшу çинчен каласа кăтартнă.

«Шанчăк» центрăн ĕçĕ-хĕлĕпе те паллашнă тĕлпулăва килнисем. Вăл 2012 çулта ĕçлеме пуçланă. Çакăнта ачасем, çамрăксем, вĕсен ашшĕ-амăшĕ валли медицина, право хуралĕн, социаллă хӳтлĕх ĕçченĕсемпе мероприятисем йĕркелессине, тренинг, калаçу, вăйă ирттерессине йăлана кĕртнĕ.

**Мария РОМАНСКАЯ.**

МАТТУРСЕМ

# Кашни кунах руль умĕнче...

Элĕк районĕнчи Тури Вылăри Валерий Осипов яланхи пекех ир вăранчĕ. Унăн мăшăрĕ те ура çинче ĕнтĕ.

– Паян çанталăк еплерех пулать-ши? – ăшшăн пăхрĕ çитмĕле çывхаракан арçын мăшăрĕ çине.

– Сывлăш температури вунă градус пулас пек туйăнать.

– Апла ĕçе пуçăнма та юрать.

– Паллах, анчах малтан апатланса илмелле, – сĕнчĕ хĕрарăм.

Акă вăл сĕтел çине пăсланса тăракан вĕри яшка тата чей пырса лартрĕ. Мăшăрĕ хатĕрленĕ апата ăша яма хирĕçлемерĕ арçын.

«Тутă хырăмпа ĕç те ăнăçать, выçăлла вара çук», – хăй тĕллĕн калаçрĕ кил хуçи.

Ултă-çичĕ минутранах сĕтел хушшинчен тухрĕ арçын. Мăшăрне тав туса урамри техника енне утрĕ.

Çанталăк лайăх чухне чунра та ырă. Валерий Николаевич ГАЗ-53 маркăллă автомашина патне пырса тăчĕ. Кабинăна уçрĕ – пурте хăй вырăнĕнчех. Анчах двигатель «чĕрĕлмерĕ». Опытлă водитель куншăн шикленсе ӳкмерĕ, капота пырса уçрĕ, кăлтăка çийĕнчех асăрхарĕ. Тинех автомашина пĕр чăрмавсăр тапранчĕ.

Техникăна лайăх ăнланать арçын. Ара, пурнăçĕ пĕтĕмпех унпа çыхăннă тесен те тĕрĕсех. Элĕкри «Сельхозтехника» тата «Сельхозхимия» предприятисенче вăй хунă, «Молния» колхозра та тăрăшма тӳр килнĕ. Тем те пулнă: çăмăллăхĕ те, йывăрлăхĕ те. Çапах та Валерий Николаевич иртнĕ вăхăта яланах ырăпа аса илет. Ĕç укçи çемьене тăрантармалăх çитнĕ. Тăвată ачана ура çине тăратма çăмăл мар паллах. Вĕсене тимлĕхĕ те кирлĕ, çав самантрах ыттисенчен кая çӳретме те юрамасть. Мĕн каласси пур, çемье пурнăçĕ шăкăр-макăрсăрах мар ĕнтĕ, анчах шăв-шав ытлашши çĕклени пулман.

Валерий Николаевичăн мăшăрĕ ĕмĕр тăршшĕпех шут ĕçĕнчен уйрăлман. Иккĕшĕ те вăй-хал çăлкуç пек тапса тăнă вăхăтра Элĕкре пурăннă. Валерий Осиповăн ашшĕпе амăшĕ вара – Тури Вылăра. Çывăх çыннисем çĕре кĕнĕ хыççăн яла куçса килнĕ. Халĕ вĕсем килте иккĕшех. Ачисем ашшĕ-амăшĕн ятне яман, кашниех пурнăçра хăйсен вырăнне тупнă. Çук, манмаççĕ вĕсем çывăх çыннисене, килсе час-часах пулăшаççĕ. Валерий Николаевич ГАЗ-53 маркăллă автомашинăна хуçалăх арканнă хыççăн туяннă. Халĕ ку техникăпа тĕрлĕ ĕç пурнăçлать.

**Юрий КОРНИЛОВ.**





СУЙЛАВ

# Çутă та ырă малашлăхшăн



Вырсарникун, авăнăн 13-мěшěнче, Чăваш Енре иртнě суйлава халăхăн 58 процентě суйлав участокěсене пырса вăл е ку кандидатшăн сасăланă. Çакă суйлавçăсем питě хастар пулнине пěлтерет. Унта хутшăннисем хăйсен гражданла позицине çапла палăртнă: Михаил Васильевич Игнатьевшăн – 362301 суйлавçă /65,54 процент/, Олег Алексеевич Николаевшăн – 80130 суйлавçă /14,79 процент/, Валентин Сергеевич Шурчановшăн – 69194 суйлавçă /12,77 процент/, Константин Сергеевич Суботиншăн – 18235 суйлавçă /3,37 процент/.

Чăваш Республикин тěп суйлав комиссийě ЧР Пуçлăхěн суйлавě пěр тапхăрпах иртнине çирěплетнě.

Авăнăн 14-мěшěнче ЧР Пуçлăхěн тивěçěсене вăхăтлăх пурнăçлакан Михаил Игнатьев республика влаç органěсен, федераци ведомстисен территориri органěсен, хуласемпе районсен ертÿçисемпе канашлу ирттернě. Михаил Игнатьев малтанах иртнě суйлав пирки хăйěн шухăшне пěлтернě. «Тăван Чăваш Ен, Раççей халăхěсен умěнче лартнă тěллевсене пурте пěрле пурнăçлатпăрах. Çавăн пекех Раççей Президентне Владимир Путина мана шаннăшăн, Чăваш Республикин Пуçлăхěн вырăнне йышăнма суйлава хутшăнма ирěк панăшăн тав тăватăп», – тенě Михаил Васильевич.

«Чи пěлтерěшли маншăн – суйлав ăнăçлă, ěнентерÿллě кăтартупа иртни. Суйлав кунěнчех çакăн пек пуласса шаннă, пур çěрте те уяв сěмě палăратчě, халăх пичě-куçě кулăпа çиçетчě. Çавăн пек çын хирěç-тăруллă пулаймасть. Кандидатсен хăйсен кăтартăвěсем тěрěс мар тесе хирěçлеме сăлтав çук. Кашни парти, кандидат мěнле çěленě – çав кăтартăва тивěçнě», – палăртнă Чăваш Республикин тěп суйлав комиссийěн председателě Александр Цветков.

Александр Иванович çавăн пекех районсенче мěнле сасăлани пирки те чарăнса тăнă. Пур çěрте те суйлава хастар хутшăннă. Чи маттурри – Елчěк районě. Унта халăхăн 92 процентě сасăланă. Шăмăршă районě те хастарлăхпа палăрнă, халăхăн 89,7 процентě суйлав участокěсене çитнě. Улатăрсен 89,1 процентě суйлава хутшăннă. Михаил Игнатьев кандидатуришěн Елчěксем, Улатăрсемпе Шăмăршăсем ытларах сасăланă.

Михаил Игнатьев канашлура палăртнă тăрăх – экономика кризисě йывăрлăхсем кăларса тăратать пулсан та Чăваш Ен инвестици йышăнас енěпе сумне ÿстерсех пырать. Çапла майпа республикăра çěнě объектсем çěкленеççě, производство хута каять, ку вара чылайăшне тăван тăрăхрах ěç тупма май парать.

Авăнăн 13-мěшěнче Чăваш Республикинче 1184 суйлав участокě хăйěн алăкне уçнă. Чăваш Республикин Пуçлăхěн тивěçěсене вăхăтлăх пурнăçлакан Михаил Игнатьев мăшăрěпе Лариса Юрьевнăпа, ывăлěпе Иванпа тата хěрěпе Марийăпа тăхăр сехет çурăра суйлав участокне çитнě. Бюллетене урнăна янă хыççăн Михаил Васильевич массăллă информаци хатěрěсен ěçченěсемпе кěске пресс-конференци ирттернě. «Паян – уяв, пěрлехи сасăлав кунě. Вырăнти хăйтытăмлăх органěсен 3746 депутачě мандат илě. Суйлав çÿллě шайра иртессе шанатăп. Политика вăйěсен кěрешěвěн тата халăх шухăш-кăмăлěн пěтěмлетěвě кěçех паллă пулě», – тенě Михаил Васильевич.

Михаил Игнатьев ывăлě Иван çак суйлавра алла пěрремěш хут бюллетень тытнă. «Паян кăмăл хавхалануллă, эпě хама Раççейěн чăн-чăн, тулли правалла гражданинě пек туйрăм», – тенě вăл. «Акă эсě те те патшалăх влаçěн тытăмне йěркелеме хутшăнтăн, хăв çине пысăк яваплăх илтěн. Çак ятпа чěререн саламлатăп», – тенě Михаил Васильевич ывăлěн аллине чăмăртаса. Чăваш Енěн тěп суйлав комиссийěнчен Ивана парне тивěçнě.

Михаил Игнатьев ытти кандидата та тав сăмахě каланă. «Чăваш Ен Пуçлăхěн пуканěшěн кěрешнě мěнпур кандидат – тивěçлě çын. Вěсем политика кěрешěвěнче пысăк ěç турěç, сахал мар сěнÿсем пачěç. Вырăнти хăйтытăмлăх тата Патшалăх Канашěн депутачěсемпе пěрле вěсене пăхса тухăпăр. Пирěн пěрле пурăнмалла», – тенě Михаил Васильевич.

# Михаил Игнатьев суйлавçăсене тав туни

**Хисеплě ентешěмсем!**

**Чăваш Ен Пуçлăхěн суйлавěнче манăн кандидатурăшăн сасăланă республикăри мěнпур çынна тав сăмахě калатăп! Эпир пěрле пулса хамăрăн пурнăçа ытларах лайăхлатма пултарнине ěненнěшěн тав тăватăп.**

**Пирěн пěрле пурăнмалла, пěрле ěçлемелле!**

**Умра пирěн пысăк, пěлтерěшлě ěçсем нумай. Эпир сирěнпе хамăрăн республикăн малашнехи аталанăвěн тěп планěсене палăртрăмăр. Эсир пěлетěр, суйлав умěнхи Халăх программине сирěн, Чăваш Енре пурăнакансен, сěнěвěрсене тěпе хурса йěркелень. Халě чи кирли – пěрле пулса хамăрăн тěп задачăсем тесе палăртнă тěллевсене чыслăн пурнăçласси.**

**Иртнě çулсенче те нумай пысăк ěç тунине палăртнă пулăттăм. Эпир Чăваш Енěн Раççей Федерацийěн регионěсен хушшинчи тивěçлě вырăнне упраса хăвартăмăр. Пирěн ěçěн чылай енě республика çыннисен тата федерацийěн шайěнчи экспертсен пысăк хаклавне тивěçрě.**

**Эпир хамăрăн ÿсěмсене упрăпăр, халăх суйланă влаç халăх ырлăхěшěн ěçлетěр, обществăшăн тăрăштăр тесе пěтěмпех тăвăпăр. Ку манăн принциплă тěп позици пулнă, пулě те.**

# Сентябрěн 19-мěшěнче – инаугураци

Чăваш Республикин суйланнă Пуçлăхě Михаил Игнатьев должноçа кěнин церемонийě сентябрěн 19-мěшěнче 12 сехетре Правительство çурчěн /Шупашкар хули, Президент бульварě, 17-мěш çурт/ Ларусен пысăк залěнче иртет. Инаугураци Чăваш Енěн наци телерадиокомпанийěн теле- тата радиоэфирěнче, Чăваш Республикин влаç органěсен порталěнче трансляциленěççě.

Аса илтеретпěр: Чăваш Республикин Пуçлăхěн сентябрěн 13-мěшěнче пěрлехи сасăлав кунěнче суйланă. 362 пин ытла /65,54%/ суйлавçă хăйěн сассине Михаил Игнатьевшăн панă.

Чăваш Республикин суйланнă Пуçлăхě Михаил Игнатьев Патшалăх Канашěн депутачěсен, республикăн Министрсен Кабинечěн членěсен, федерацин территориri влаç органěсемпе Чăваш Республикин вырăнти хăйтытăмлăх органěсен ертÿçисен тата чěннě хăнасен умěнче тупа тăвать.

# Владимир Путин регионсен ертÿçисемпе тěл пулнă

Сентябрěн 17-мěшěнче Сочи хулинче Раççей Президенчě Владимир Путин Раççей Федерацийěн 22 субъекчěн сентябрěн 13-мěшěнче пěрлехи сасăлав кунěнче суйланă ертÿçисемпе курнăçнă. Унта суйлав кампанийěн кăтартăвěсене тата Раççей регионěсене аталантарассипе çыхăннă малашнехи ěç планěсене сÿтсе явнă.

Тěлпулăва Чăваш Республикин Пуçлăхěн тивěçěсене вăхăтлăх пурнăçлакан Михаил Игнатьев та хутшăннă. Аса илтеретпěр: республика Пуçлăхěн суйлавěнче Михаил Игнатьевшăн сасăлава хутшăннă суйлавçăсен 65,54% хăйсен сассисене панă.

Тěлпулура Владимир Путин Президент сăмах каланă. Суйлав кампанийě уçă та тÿрě кăмăллă, тепěр чух питě çивěч конкурентлă кěрешÿре иртнине палăртнă. Федерацин хăшпěр субъектěнче кěрешÿ кашни сасăшăн тенě пек пынă. Пěринче вара иккěмěш тур иртě. Çакă кěрешÿ уçă, тÿрě кăмăллă пулнине палăртнă Владимир Владимирович.

Раççейре нумай партиллě тытăм вăй илсе, политика культури ÿссе пыни куçкěрет. Çак стандарта Патшалăх Думин 2016 çулхи суйлавěнче те тивěçтерме сěннě.

РЕДАКТОР СĂМАХ ЫЙТАТЬ

# Ятсăр статья

Маргарита ИЛЬИНА

**Статья ячě çырма ларса пěрремěш сăмахсене шурă хут çине куçариччен нумай чухне çăмăллăнах çуралать – мěн çырмаллине, вулакана мěн каламаллине пěлсе тăнă чух. МĚН калассине халě те пěлетěп-ха, МĚНЛЕ калассы кăшт минретет пуçа. Ара, республикăра тухса тăракан, хăйне оппозици тесе палăртакан пěр хаçат, Э.Мочалов алă пусаканскер, чăваш хěрарăмěн ятне сěмсěррěн варалама тăнă та... Çав сěмсěрлěх аптăратса янипе шухăшсем те арпашăнаççě пăртак. Çын тени çапла териех хăрушă пулни тěлěнтерет. Мěн çитмест-ха эреме? Пěр-пěрне кăшлатпăр-çапăçатпăр, ним айăпсăр çынна варалама тăрăшатпăр... Мěншěн? Выçă ларатпăр-и? Хěвел айěнче вырăн çитмест-и? Хăйне тěкěнмен чух, тутă чух тискер кайăк та теприне тапăнмасть. Чăн та, çын тискер кайăкран та хăрушăраххине хамăр курса ěнентěмěр...**

**Юрать, тěпленрех каласа кăтартар. Çак кунсенче редакцие усал хыпар çитрě. Хайхи çав хаçат /те хаçат темелле ěнтě ăна, патшалăх регистрацийě витěр те тухманскерне/ "Чăваш хěрарăмěнче" кун çути курнă статьяна тытнă та пирěнтен ирěк ыйтмасăрах пичетленě. Пирěн пурлăхпа усă курассине эпир хирěç мар-ха, пушшех те – ку тěслěхре статья авторне те, хаçат ятне те палăртнă. Анчах та çав вăхăтрах рубрикине тата хăйсене кирлě пек улăштарнă. Мěнлерех улăштарнă-ха тата! Унсăр пуçне статья пуçламăшěнче тата варринче хăйсем çырнă сыпăксене кěртсе лартнă. Çапла майпа пирěн журналист Татьяна Наумова Чăваш Республикин прокуратурин материалěсемпе усă курса хатěрленě статьи, сусăр ача ÿстерекен çемьен тата вăрçă ветеранěн прависене хÿтěлесе çырнăскер, асамлă майпа... Игнатьева хирěç пулса тухнă. Сăнарлă каласан, Татьяна "çуратнă" Васса... Наççана çавраннă. Суйлав умěнхи чи хěрÿ тапхăр... Михаил Васильевич ун чухне республика Пуçлăхěн тивěçěсене пурнăçлать. Мěн кăна каласа хăртман пулě унта Михаил Игнатьева! Статья авторне çаплипех хăварнине пула çак таса мар япалана пирěн журналист çырнă пулса тухать. Тěлěнмелле, мěншěн шăпах "Чăваш хěрарăмне" суйласа илнě-ха? Хаçат авторитечěпе, ят-сумěпе усă курас тенě-тěр... Кун пек тěслěх, чăн та, суйлав тапхăрěсенче пулкаланă, анчах та пирěн тиражпа пархатарлă тěллевпе кăна усă куракаччě. Хальхинче "Чăваш хěрарăмě" чиновниксене критиклениe пачах тепěр май çавăрса лартнă. Тепěр тесен, критика кирек хăш хаçатра та пичетленмест-и вара? Çапла, эпир чиновниксен е ыттисен йăнăшěсене асăрхама, ун пирки хаçатра çырма шикленместпěр. Анчах та нихăçан та ют ят хыçне пытанмастпăр, урăх хаçатри статьясемпе те витěнместпěр. Çакă уçăмлă, "Чăваш хěрарăмě" – халăх юратса вулакан кăларăм, çакăнпа усă курса суйлавра Игнатьева ура хума хăтланнă та усал шухăшлă вăйсем. Анчах та вěсем çакна шута илмен: вулакан та, суйлакан та – айван мар. Хурапа шурра авăнах уйăраççě пирěн туссем – çакна иртнě суйлав пěтěмлетěвěсем çирěплетеççě. "Чăваш хěрарăмěн" страницинче яланах объективлă критика кăна пулнă, пулать те. Килпетсěр сăмахсем вара – пирěн хěç-пăшал мар. Тěрěссипе, чăваш хěрарăмě аллине хěç-пăшал тытассинчен Турă сыхлатăр. Ачашлăх, çепěçлěх, юрату – унпа усă курсах тěнчене парăнтарать хěрарăм. Малашне те çапла пултăрччě.**

**...Çапла, статьяна çырса пěтерсе вěçне пăнчă лартсан та ячě пирки нумай шухăшларăм. "Чăваш хěрарăмě" – утиял мар", "Васса вырăнне – Наçса", "Ултавăн ури кěске", "Усалăн ěмěчě пурнăçланаймарě", "Таса çумне пылчăк çыпăçмасть", "Тытăр ăна, тытăр – тытăр статья вăррине!"... Кун пеккине речěпех тăсса кайма пулать: хăвна хăшě килěшет – çавна суйла, вулаканăм. Кун пекки – статьяна ячěсěр пичетлени – халиччен пулманччě-ха. Анчах та "Чăваш хěрарăмěнче" пичетленнě материала çапла пěр намăссăррăн варласа журналист ятне варалас тенине те халиччен курманччě. Çак хаçат тилхепине нумай та мар, сахал та мар, 15 çул тытса пыратăп пулин те. Çавăнпа та халичен пулман тепěр ěç тăвас терěм – статьяна ятсăрах пичетлерěм.**

**Усал, тепěр тесен, кирек мěнле утăмшăн та, явап тытмалли паллă. Статья вăррисем тěлěшпе лару-тăрăва Муркаш район прокуратури уçăмлатě. Ěç-пуçпа вулакана паллаштарсах тăрăпăр.**

ЫЙТĂМ

# Ĕçĕн пархатарĕ пысăк



**Хальхи экономикăна аталантарас, обществăра ĕçе тата ĕç çыннине хисеплессине çирĕплетес, конкурентлă ырă условисем йĕркелес тĕллевпе Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев 2016 çула Ĕç çыннин çулталăкĕ тесе пĕлтерчĕ. ЧР Министрсен Кабинетне рабочи професийĕсен хисепне çĕклес, çамрăксене экономикăн чăн секторĕн отраслĕсене тата социаллă сферăна явăçтарас, предпринимательлĕхе аталантарас, ĕçре çĕнĕлĕхсене тата пултарулăха çул парас, ĕç тухăçлăхне ÿстерес тĕллевлĕ мероприятисен планне хатĕрлеме тата çирĕплетме хушрĕ вăл. Çав вăхăтрах Михаил Васильевич вырăнти хăйтытăмлăх органĕсене, организацисене пĕрлехи ĕçе хастар хутшăнма сĕнчĕ.**

**Республика Пуçлăхĕн Михаил Игнатьевăн 2016 çул Ĕç çыннин çулталăкĕ пуласси çинчен калакан Хушăвне паллă çынсем мĕнле хаклаççĕ-ха?**

**Николай ГЛУХОВ, Патăрьел район администрацийĕн пуçлăхĕ:**

– Çак Хушăва эпĕ питĕ лайăх тесе хаклатăп. Вăл ĕçлекен çынна ырă енчен кăтартма май парать, хавхалантарать. Çитес çулталăк республикăна хальхи экономика лару-тăрăвĕнче аталанма пулăшĕ, ĕçе тата ĕç çыннине ытларах хисеплеме вĕрентĕ, ĕçлемешкĕн лайăх условисем туса парĕ. Тĕрĕссипе, пирĕн мĕнпур вăхăт ĕçре иртет, киле çывăрма çеç таврăнатпăр. Пурнăçра ахаль, нимĕн тумасăр ларакан çеç йăнăшмасть пуль, ĕçре лайăххи те пулать, çав вăхăтрах йывăрлăхĕ те сиксе тухать, çапах та, кирек мĕнле пулсан та, çын ĕçпе илемлĕ.

**Алина ИВАНОВА, Европа тата тĕнче чемпионки:**

– Çитес çула Ĕç çыннин çулталăкĕ тесе палăртнине тĕрĕс тесе шухăшлатăп. Эпир, ял ачисем, мĕн утма пуçласанах ĕçлеме тытăннă пуль. Паллах, хальхи çамрăксем пăртак урăхларах, ашшĕ-амăшĕнчен хатĕррине кĕтеççĕ. Эпир ÿснĕ чухне вăхăчĕ урăхларах пулнă. Тĕрĕссипе, ĕççĕр мĕнле пурăнмаллине пĕлместпĕр те. Кану кунĕсенче те ахаль лармасть пирĕн халăх, пахчара вăй хурать, дачăна çитсе килет тата ытти те. Чăваш хĕрарăмĕ пирки каламастăп та, вăл авалтан иртен пуçласа каçчен тар тăкма хăнăхнă, арçынпа пĕр тан ĕçленĕ. Этемлĕхĕн черчен çуррийĕ тесе каланипе килĕшес те килмест тепĕр чухне. Ялтисем те, хуларисем те пĕрешкел. Республикăра ĕçчен çын нумайăн, чăваш халăхĕ ÿркенменни савăнтарать. Ĕçлемесен нимĕнле ăнăçу та пулмасть, çавăнпа нихăçан та пĕр вырăнта ларма юрамасть. «Ахаль лариччен кĕрĕк арки те пулин йăвала», – тенĕ ваттисем.

**Никифор НАУМОВ, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ:**

– Çак Хушăва алă пусни ырă кăмăл кăна çуратать. Çут тĕнчере ĕç – чи пысăк хуçа. Ачана ĕçе вĕрентсе çитĕнтерсен пурнăç малалла каять. Çакă патшалăхшăн та, халăхшăн та çав тери пĕлтерĕшлĕ. Ĕç майне пĕлекенсем кĕпер те хываççĕ, çурт та хăпартаççĕ, пахча та лартаççĕ. Вăлах халăха туслаштарать.

«Микихвер, юратнă хĕрÿ ĕçлеме пĕлтĕр, вара пурнăçу ăнса пырĕ», – авланиччен ăса вĕрентнĕччĕ анне. Турă мана шăпах çавăн пеккипе паллаштарчĕ. Хăш чухне арăм манран ытларах ĕçленĕшĕн аванмарланатăп та. Çав вăхăтрах вăл мана нихăçан та сивĕ сăмах каласа курман.

**Андрей КУЗНЕЦОВ, Сĕнтĕрвăрри ентешлĕх ертÿçи:**

– Çак шухăша, паллах, ырламалла. Ĕç çыннин çулталăкĕнче лайăххине анчах кĕтĕпĕр. Ял халăхĕ валли ĕç вырăнĕсем кирлĕ. Вăй питтисем пысăк укса шыраса таçта аякка ан çÿреччĕр. Ачи-пăчине, мăшăрĕпе юнашар пурăнччăр вĕсем. Тата çемьене тăрантармашкăн тивĕçлĕ шалу тÿлемелле. Укçа-тенкĕ ыйтăвне тÿрех татса пама йывăр – çакна кашниех ăнланать. Çавăнпах ял тăрăхĕнче пурăнакансене грант укçипе пулăшсан тем пекехчĕ. Чунран тăрăшакансене хавхалантарни те витĕмлĕ.

ПУЛТАРУЛĂХ

# Чунĕ кайăк пек вĕçет



Зоя Сывлăмпи /Алексеева/ малтанхи сăввисене шăпах «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçатра пичетлерĕ. Кайран калавсем çырма пуçларĕ, кĕнеке хыççăн кĕнеке кăларчĕ. Чун ыйтнипе çыраканăн кашни йĕркинче – кулленхи пурнăçĕ, шухăш-ĕмĕчĕ, пăшăрханăвĕсем савăнăçĕ.

Акă унăн черетлĕ саккăрмĕш кĕнеки кун çути курчĕ. «Юрату ахрăмĕнче», тĕслĕхрен, «Ман чунăм кайăк пек вĕçет!», «Тĕрлет ирхи шуçăм асам тĕррине...», «Сывлать халь çăмăллăн сенкер тÿпе!» сыпăксем пур. Мĕнле ытарлă каланă!

Çак эрнере Зоя Леонидовна юлташĕсене хăйĕн пултарулăх каçне пуçтарчĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Хусанушкăнь ял тăрăхĕн гимнĕпе пуçланчĕ уяв. Унăн сăмахĕсене шăпах кĕреке хуçи хайланă. Хĕрлĕ Чутай район ентешлĕх ертÿçи Александр Самылкин ял-йыш ячĕпе Зоя Сывлăмпие асăнмалăх сехет парнелерĕ. Ăна сăвăçăн сăнĕпе илемлетнĕ. «Сехечĕ питĕ кирлĕ, эх, вăхăт парнелекен çук», – шÿтлесе те илчĕ хĕрарăм. «Çăлкуç» хыççăн «Урпаш» фольклор ушкăнĕ тухрĕ сцена çине. Вĕсем те хăйсен ентешне хавхалантарма килсе çитнĕ. «Унăн сăввисем пирĕн майлă, Хĕрлĕ Чутайла...» – мухтанса та илчĕç хăнасем.

Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Марина Карягина поэзи нумай фестивалĕнче пулнă. Çакă, паллах, ытти тăрăхри сăвăçсене çыхăну йĕркелеме май парать. Хăшне-пĕрне патшалăх укçатенкĕпе пулăшни ыттисемшĕн курăмлă. Пирĕн патри сăвăçсен тÿлевсĕр ĕçлеме тивет. Çапах кĕнеке кăлармашкăн май тупаççĕ калем ăстисем.

Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Раиса Сарпи Зоя Сывлăмпие халаллаçа темиçе сăвă шăрçаланă. Чăн юлташ кăна çапла хавхалантарма пултарать.

Муркаш районĕнчи «Юнкă» пултарулăх ушкăнĕ те хăйĕн репертуарне Зоя Сывлăмпи сăввисем тăрăх кĕвĕленĕ юрăсене кĕртнĕ. Чăвашлисене вырăсла та куçарнă.

Çеçпĕл Мишши музейĕ çумĕнче йĕркеленĕ «Сас» пултарулăх ушкăнне те куракансем ăшшăн йышăнчĕç. Çак йышра та пирĕн юлташсемех: Антонина Андреева, Лидия Сарине, Нина Пăрчăкан...

Елена Османова шăрантаракан «Анне ăшши» юрă та халăхра сарăлчĕ. Унăн авторĕ Зоя Сывлăмпи хăй те тусĕпе пĕрле кăмăлтанах юрларĕ.

Людмила Бахмисова сăвăç юратăва сăнлакан йĕркесем тыткăнланине пытармарĕ. Пĕтĕм чун-чĕрепе саваканăн ăшĕнче çавраçил хуçаланать пуль çав...

Эпир те Зоя Леонидовнăпа пĕрле савăнатпăр. Саламлатпăр ăна! Ан иксĕлтĕрччĕ унăн пултарулăхĕ!

**Марина РОМАНСКАЯ.**

КОНКУРС ÇĔНТЕРÿÇИ

# Патша сачĕ майлах

**/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.**

Апла тăк усал-тĕсел алхасаймĕ çакăнта. «Дизайнерсем унпа тавралăха илемлетме усă кураççĕ», – ăнлантарать Надежда Никоновна.

Барбарис хĕп-хĕрлĕ çырлипе илĕртет. Вăл канфет тутиллĕ. Иçĕм çырли те пиçсе çитнĕ. Яппун айви тутланманха. Шултра пилеш пĕрре те йÿçĕ мар. Çавнашкалах темĕн тĕрлĕ чăрăш çитĕнет çак килте.

Кĕпер çинчен пĕвери пулăсем лайăх курăнаççĕ. Вĕсене вăлтапа та тытма пулать.

Ларса каласмалли вырăн та хĕтлă. Унта шыв та кĕртнĕ, таса марри юхса тухать. Ниçта пăрăнмасăрах шашлăк е урăх тĕрлĕ апат пĕçерме меллĕ.

Шыв пĕр бакĕ слона çаврăннă, теприне иçĕм çырли хуплнă – аякран курăнмасть те. Каскăран уяр тунă. Акă курăр-ха – курăк хушшинче тăмана ларать. Инçех мар пакша кĕлетки курăнать. Хăтлăх кĕртекен çак теттесем шăп та лăп хăйсен вырăнĕнче.

Лайăххин чикки çук теççĕ вĕт. Сад варринче кĕçех фонтан ĕçлеме пуçлĕ. Ăна туса пĕтернĕпе пĕрех. Надежда Никоновна хапхаран кĕрсен хутлă-хутлă арка тăвасшăн. Бетон вырăнне брусчатка сарасшăн.

Сăмах май, картишĕнче кăна мар, кермен пек çуртĕнче те чечек нумай унăн. Илемлĕ, «республикăри чи хăтлă та симĕс вырăн» тесе çирĕплетсех калама пулать.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

ТЕАТР

# Атьăр спектакль курма!

Кĕçнерникун, авăн уйăхĕн 17-мĕшĕнче, Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕнче черетлĕ 83-мĕш сезон уçăлчĕ. 13 сехетре артистсем ачасем валли «Ванюк ĕçе хăнăхать» юмах кăтартрĕç. Авторĕ – Владислав Николаев. Унта çуллахи каникул вăхăтне сăнланă. Ял пурнăçĕ, хуларипе танлаштарсан, урăхларах иккен. Çакна арçын ача хăвăртах ăнланса илет. Çăкăр, Сĕт, Çĕрулми, Колорадо нăрри ăна ĕçе хăнăхма пулăшаççĕ.

Каçхине Анатолий Хмытăн пьеси тăрăх хатĕрленĕ «Çерем çинчи çиçĕм» спектакль пуçланчĕ.

Вырсарникун Çамрăксен театрĕ ача-пăча валли пысăк уяв йĕркелесшĕн. Куракансем асамлăхпа çулçÿрев, ырăпа усал, тупмалли юмахсемпе вăрттăнлăх тĕнчине лекĕç. Уяв программине ачапăча чи лайăх спектаклĕсен – «Кот в сапогах», «Клочки по закоулочкам», «Мымренок», «Когда поют светофоры», «По зеленым холмам океана», «Один дома» – сыпăксене кĕртнĕ. Юмах тĕнчи 12 сехетре хăйĕн алăкне уçса ярĕ.

Авăн уйăхĕн 22-24-мĕшĕсенче çакăнтах театр педагогики енĕпе семинар иртĕ. Искусствоведени кандидачĕ, «Театр педагогики» методика пособийĕн авторĕ Ольга Андрейкина тата ачапăча психологĕ Ольга Шевнина ăсталăх класĕсем йĕркелĕç. Ку проекта Театр институчĕ пуçарнă. Вăл куракансемпе хутшăнма май парать. Хальлĕхе çакнашкал тренинг Раççейĕн 10 хулинче иртнĕ.

Сăмах май, Çамрăксен театрĕ РФ Культура министерствин тепĕр грантне çĕнсе илнине палăртса хăварас килет. «Театрин» проекта пурнăçа кĕртнĕ май артистсем сусăрсене, ашшĕ-амăшĕн хÿттисĕр юлнă ачасене, ватă çынсене хăйсен пултарулăхĕпе паллаштараççĕ. Сцена ăстисем Шупашкарти Ача çуртне, Етĕрне районĕнчи Тепĕрти ватăсемпе сусăрсен çуртне çитсе килнĕ.

Авăн уйăхĕн 11-мĕшĕнче Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕ 56-мĕш сезонне «Нарспи» спектаклĕпе пуçларĕ. Театр хăйне май акци иртерет. Артистсене чечек çыххи парнелекенсене курав залне уйăх тăршшĕпех тÿлевсĕр кĕртĕç.

**Марина ГРИГОРЬЕВА хатĕрленĕ.**

ЙĂЛА-ЙĔРКЕ

# Кĕпĕрнаттăрсене тыткăнланă «Илем»

**Сĕнтĕрвăрри тăрăхĕнчи Кайри Шĕнерпуçри культура çурчĕ çумĕнчи 33 çул каяллах йĕркеленнĕ «Илем» фольклор ушкăнĕ авалхи – çĕр çул каяллахи – чăваш юррисене шăрантарни пирки илтнĕччĕ-ха. Чун чăтмарĕ, ял çыннисен пахчари кĕрхи ĕçсем вĕçленме ĕлкĕрейменнине пĕлетĕркачах çак кунсенче вĕсемпе курса каласма ятарласа çула тухрăмăр.**



● НАТАЛЬЯ АНДРЕЕВА.

## Аваллăха сума сăвакансем

Кăшман кăларма пăрахсах чăваш кĕписем тăхăнса ялти культура çуртне вĕçтерсе çитрĕç Кайри Шĕнерпуçсем. Хуткупăсне, парапанне, тăмрине тата музыка ытти инструментне туртса кăларса илемлĕ юрă-кĕвĕ шăрантарма тытăнчĕç.

«Тур лашийĕ пулас çук та,
Тур лашийĕ пулас çук.
Пулсан та пуçне ухас
çук та,
Пулсан та пуçне ухас çук.
Сарă хĕрĕ пулас çук та,
Сарă хĕрĕ пулас çук.
Пулсан та хитре кулас
çук та,
Пулсан та хитре кулас
çук...» – ян та ян кайрĕ юрă. Тĕлĕнмелле илемлĕ те уçă сасăлласкерсене итлесе тăранма та çук. Авалхине çеç мар, хальхи эстрада тата çармăс халăх юррисене те шăрантарчĕç. «Илем» репертуарĕнче юрăсен шучĕ те çук. Вĕренме пуçлани те нумай. «Пирĕн те мĕншĕн кулянас?» ĕлĕкхи юрă та кĕçех сцена çинче янăрама пуçлĕ.

– Федор Гаврилов пухса хатĕрленĕ юрăсен пуххипе усă куратпăр ытларах. Унти сăмахсем чăн та чун-чĕрене пырса тивеççĕ. Анне такмакĕсем те асра. Авалхи юрă-кĕвĕре – чăн-чăн чăвашлăх тымарĕ, вĕсемсĕр епле-ха? – каласăва хутшăнчĕ чылай çул район хаçатĕнче корреспондентра ĕçленĕ, халĕ фермерта тăрăшакан Вениамин Смелов купăсçă. Купăсçă çеç те мар вăл, репертуарти мĕнпур юрă-кĕвве илемлетекенĕ. Унсăрăн пĕр репетици те иртмест. «Кайри Шĕнерпуç» ял гимнне те вăлах çырнă. Тайăр Тимккин хурлăхлă та тарăн шухăшлă «Каçхи сасă» сăвви тăрăх та юрă хывма тытăннă.

Паян фольклор ушкăнне 16 çын çӳрет. Чи асли – Зоя Мартынова. Вăл 80 çулта. Ăна никам та 8 теçеткене çитнĕ тесе калаймĕ. Сцена çынна çамрăклатать тесе ахальтен каламаççĕ иккен. Вăл юмахри сăнарсене, çутçанталăк илемне пир çине куçарма ăста. Унăн тĕрри-эрешне районти куравсене те илсе каяççĕ. Чăваш кĕписене те хăех çĕлет Соня аппа. Сăмах май, фольклор ушкăнне çӳрекенсенчен кашниех çĕлеме-тĕрлеме маçтăр. Хăйсен ăсталăхне çамрăксене те вĕрентсе хăварасшăн вĕсем. Чăваш йăли-йĕркине, аваллăха сума сунипе те сыхăннă çакă.



## Спонсор пулăшăвĕ

Вырăнти «Промкомплект» пĕрлĕх те «Илем» ушкăна асăрханă, юрри-кĕввине ытарайманран пысăк пулăшу панă кăçал. Вăл уйăрнă укçа-тенкĕпе купăс, фотоаппарат, тăмра тата музыка ытти инструментне туяннă вĕсем. «Тĕлĕнмелле иртрĕ кăçалхи Çăварни. Капăр тумланса ял урамне тухрăмăр. Хамăр калама çук хĕпĕртенĕ. Кашнин аллинчех – музыка инструменчĕ. Ял халăхĕпе пĕрле хĕл сиввине пăхмасăрах кунĕпе юрларăмăр-ташларăмăр», – чунне уçать ялти культура çурчĕн пуçлăхĕ, «Илем» ушкăн ертӳçи Эльвира Анатольевна. Сăмах май, вăл кăçал республика «Муниципалитет учрежденийĕн чи лайăх ĕçченĕ» конкурсĕнче çĕнтернĕ, 50 пин тенкĕлĕх гранта тивĕçнĕ.

## Хăнасене тĕлĕнтернĕ

«Илем» 33 çул хушшинче кӳршĕ ялсемпе районсене кăна мар, Мускава, Тутар, Мари республикисене çитнĕ. Шупашкарсене те хăйĕн пултарулăхĕпе пĕрре кăна мар савăнтарнă. Республика кунĕнчи Акатуйра пĕлтĕр чаплă туй кĕрлеттернĕ. Тутарстанри Нурлатра Пĕтĕм тĕнчери чăвашсен уявĕнче пулнине, унта хăйсене ăшшăн йышăннине хавхаланса каласа кăтартрĕç. Чĕнсен татах та каяс шухăшлă аякри тăвансем патне. Çĕрпӳ ярмăрккинче те вĕсене кашни çулах хапăл туса йышăнаççĕ-мĕн.

Икĕ-виçĕ çул каялла Шуршăлти культура çуртне килнĕ Атăл тăрăхĕнчи кĕпĕрнаттăрсем те вĕсен пултарулăхĕнчен тĕлĕннĕ.

– Пирĕнтен уйрăлаймаççĕ, сăн ӳкереççĕ, хушпу тенкисене тыта-тыта пăхаççĕ. «Халех республикăна кăлармалла, пурте пĕлччĕр çак ушкăн пирки, тĕлĕнмелле вăйлă, сассисем еплерех уçă...» – тенĕ хăнасем кайран, – пĕлтерет культура çурчĕн пуçлăхĕ, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Э.Николаева.

## Туслăх пĕрлештерет

Авалхи чăваш туйне те кăтартаççĕ «Илемсем». Ăна туллин, шăп ĕлĕкхилле сăнлама тăрăшаççĕ. Паллакансем ыйтнипе ушкăнпа хăйсен тăрăхĕнчи туйсене те пĕрре мар кайнă. Халăх лайăх йышăннине кура спектакльсенче те выляççĕ «Илемсем».

Мари Республикинчи Кокшамар ялĕнчен кубокпа таврăннă вĕсем. Çăкăр-тăвар хире-хирĕç, кайран çармăссем хăйсем те килсе курнă. Кайри Шĕнерпуçсен таравăтлăхĕпе ăшă кăмăлĕ, уйрăмах туслăхĕ тĕлĕнтернĕ, тыткăнланă вĕсене.



● ЗОЯ МАРТЫНОВА.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе 70 çул çитнине халалласа клуб умĕнче палăк уçнă кăçал. 90 киллĕ пысăкăш мар ялта çак пархатарлă ĕç валли 69 пин тенкĕ укçа пуçтарнă. Никам та айккинче тăрса юлман. Хăрушă вăрçă кашнин чӳречинченех пырса шаккамă-çке. Ялта инкек, хуйхă-суйхă пулать-и – Кайри Шĕнерпуçсен пурте пĕрле кар тăраççĕ, йывăрлăха лекнĕ çынна пулăшма васкаççĕ. Пĕр-пĕринпе туслă пулсан çеç çут тĕнче хитререх иккенне, пурнăç малалла кайнине ăнланаççĕ.

– Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пуç хунисемпе сывă таврăннисем валли палăк пулман пирĕн ялта. Хыпарсăр çухалнă атте халь мана çакăнта выртнăнах туйăнать, – паянхи кун та ашшĕ янă виç кĕтеслĕ çырусене упракан Соня аппа куççульленчĕ.

Ку ялтан 77-ĕн вăрçа тухса кайнă, вĕсенчен 34-шĕ çеç сывă таврăннă. Çĕнтерӳ кунĕнче паттăр салтаксене халалласа клуб тавра 77 туя лартса хăварнă кăçал. Вĕсем пурте чĕрĕлнĕ.

## Юрлама çеç мар...

Фольклор ушкăнне çӳрекенсем сцена çине Сĕнтĕр тăрăхĕнчи чăваш тумĕпе тухаççĕ. Çи-пуç енчен питĕ пуян вĕсем, хăйсен укçи-тенкипе çĕнĕрен çĕнĕ кĕпе çĕлеççĕ. «Пĕр тум йăлăхтарать», – теççĕ ушкăнрисем. Сцена çине тухма капăр тум çĕлекен ылтăн аллăллă Наталья Андреева çĕвĕçĕ ĕçне çеç мар, тухья-хушпу ăсталама та маçтăр.

Кайри Шĕнерпуç артисчĕсем пĕр-пĕр уява хатĕрленнĕ май – кашни кунах, ытти чухне эрнере виçĕ-тăватă хут каçсерен репетицие пухăнаççĕ-мĕн.

– Тавах Эльвира Анатольевнăна. Вăл пире пĕр вырăнта ларма памасть. «Çук» тесе калама чĕлхе çаврăнмасть, юрамасть те. Сцена хавхалану кӳрет, килте кичемленсе лармастпăр, ал-ура, сывăсем ыратни çинчен те манса каятпăр, – çирĕплетеççĕ капăр тумлă инке-аппасем.

– Мăшăра та пĕрле илсе çӳреме тытăнтăм. Халь репетицие манран малтан тухса вĕçтерет, – каласа кăтартать Сĕнтĕр ене Вăрнар тăрăхĕнчен качча килнĕ Вера Думилина.

Халĕ «Илемсем» Ваттисен кунне хатĕрленеççĕ. «Чăваш хĕрарăмĕнчен» килнине пĕлсе ахаль çеç пуçтарăнмарĕç ялти культура çуртне, чăн-чăн концерт йĕркелерĕç. Юхрĕ те юхрĕ юрă.

«Ӳкнĕ сарă çулçă урăх ешермест,
Иртнĕ çамрăк ĕмĕр каялла килмест...» – «Илемрен» уйрăлсан та илемлĕ кĕвĕ çул тăршшĕпех асран тухмасăр пычĕ. Сĕнтĕр тăрăхĕнче чăвашлăх, атте-анне чĕлхи кĕрлесе, янраса тăни чуна хăпартлантарчĕ.

**Елена АТАМАНОВА.**
Автор сăнӳкерчĕкĕсем.



АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР

### Кабачокпа помидор салачĕ



**3-шер килограмм кабачок, помидор, 5 пылак пăрăç, 1 йӳçĕ пăрăç, 4 шăл ыхра, 100 миллилитр 9 процентлă уксус, 250 грамм тип çу, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Пылак пăрăçпа помидора аш арманĕ витĕр кăлармалла. Кабачока пĕрчĕлесе турамалла. Томатпа пăрăç хутăшне çулăм çине лартмалла. Вĕреме кĕрсен çу, тăвар, сахăр, кабачок ямалла. 30 минут пĕçерсен вĕтетнĕ пăрăç, уксус хушмалла. Тепĕр 5 минутран салата çулăм çинчен илсе банкăсене тултармалла. Кутăн лартса хулăн япалапа хупламалла.

### Лечо

**3-4 килограмм помидор, 1-ер килограмм пуçлă сухан, кишĕр, пылак пăрăç, 1 стакан сахăр, 1,5 стакан тип çу, 1 апат кашăкĕ 6 процентлă уксус, 2 апат кашăкĕ тăвар кирлĕ.**

Вĕттĕн туранă пахчаçимĕçе сахăрпа, тип çупа пăтратмалла. 30 минутран вăйсăр çулăм çине лартмалла. Вĕреме пуçласан 40 минут пĕçермелле. Юлашкинчен уксус хушмалла. Çак хутăша стерилизациленĕ банкăсене тултармалла.

### Йӳçкăшманпа, сухарипе

**400 грамм йӳçкăшман, пуçлă 1 сухан, 2 татăк хура çăкăр, тĕтĕмленĕ 150 грамм салă, 1 шăл ыхра, тăвар кирлĕ.**

Йӳçкăшмана пĕрчĕлесе каслалла, тăвар сапмалла. Тăваткалласа туранă салăна кăштах ăшаламалла, вĕтетнĕ ыхра хушмалла. Çурма çаврашкан каснă сухана салă çăвĕпе ăшаламалла. Тăваткалласа каснă çăкăра духовкăра типĕтмелле. Салатри çимĕçсене пăтратмалла.

### Кăмпапа пăшăхланă пĕвер

**800 грамм пĕвер, 1 стакан хăйма, пуçлă 2 сухан, 5-6 кăмпа, 2 апат кашăкĕ томат нимĕрĕ, 50 грамм услам çу, 1/2 стакан çăнăх, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Пĕвере пĕрчĕлесе турамалла, тăвар, пăрăç сапмалла. Çăнăхпа йăвалаccа услам çупа çурма пиçиччен ăшаламалла. Вĕттĕн туранă суханпа кăмпана пăшăхламалла.

Пĕвере, кăмпапа сухан хутăшне тăм чӳлмеке тултармалла, 1/2 стакан шыв, хăйма, томат нимĕрĕ хушса духовкăра 15-20 минут пăшăхламалла.

Ку апата йӳçĕтнĕ купăстапа, тăварланă хăярпа, салатпа пĕрле çимелле.

### Ăшне тултарнă кăвакал

**1 кăвакал, 2 панулми, 1 апельсин, 4 шăл ыхра, 4 апат кашăкĕ майонез, 1 апат кашăкĕ пыл, тăвар, техĕмлĕх кирлĕ.**

Вĕттĕн туранă ыхрана майонезпа, тăварпа, пылпа, техĕмлĕхпе пăтратмалла. Çак хутăшпа кăвакала шалтан та, тултан та сăтăрмалла.

Панулмие – çурма çаврашкан, апельсина тăваткалласа турамалла. Хутăша кăвакал ăшне тултармалла. Ăна çатăркана чиксе духовкăра пĕçермелле.

### Панулми кукăлĕ

**Чуста çăрма 250 грамм çăнăх, 150 грамм услам çу, 100 грамм хăйма, 3 апат кашăкĕ сахăр, 1 чей кашăкĕ апат соди кирлĕ.**

**Ăшне хума 4 панулми, 200 грамм хăйма, 1 стакан сахăр, 1 çăмарта, 2 апат кашăкĕ çăнăх, 0,5 лимон, тип çу хатĕрлемелле.**

Çăнăхпа апат содине çемçе услам çупа хутăштармалла. Тĕпренчĕк майлă хутăша сахăрпа, хăймапа пăтратса чуста çăрмалла. Ăна 30 минутлăха духовкăна лартмалла.

Хăймана сахăрпа, çăмартапа, çăнăхпа пăтратмалла. Çурма çаврашкан туранă панулмие лимон сĕткенĕпе сирпĕтмелле.

Чустана çатма тĕпне сармалла, айккине хăпартмалла. Ун çине панулми хумалла. Ăна хăйма кремĕпе витмелле. Кукăле духовкăра 45-50 минут пĕçермелле.

### Панулмипе рис

**Панулми, 90 грамм рис, 2 апат кашăкĕ тип çу, исĕм, сахăр, корица кирлĕ.**

Риса çурма пиçиччен вĕретмелле. Панулмин çӳлти пайне хуппăча майлă касмалла, вăррине кăлармалла. Риса шӳтернĕ исĕмпе, сахăрпа, корицăпа пăтратмалла. Çак хутăша панулми ăшне тултармалла, маларах хатĕрленĕ хуппăлчапа витмелле. Панулмие духовкăра 30 минут пĕçермелле. Сĕтел çине лартиччен мăйăр, сахăр çăнăхĕ сапма юрать.

ПАХЧАÇĂ КĔТЕСĔ

# Исĕм лартатпăр





Исĕм йывăçĕ ытти тĕмпе пĕрле япăх ӳсет. Ун валли ятарлă лаптăк пулни лайăхрах. Хĕвеллĕ те çилтен хӳтĕ вырăна килĕштерет вăл. Тĕмĕсен речĕ çурçĕртен кăнтăралла тăсăлмалла. Исĕм шурлăхлă, тăварлă тăпрасăр пуçне кирек епле çĕр çинче те аван ӳсет.

Пĕр çулти хунав – ӳстермешкĕн чи юрăхли. Вăл виçĕ е ытларах тымартан, 3-4 папкаран тăмалла. Ăна лартма 70-80 сантиметр сарлакăш, çавăн чухлех тарăнăш шăтăк чавмалла. Тăпран çӳлти чи пулăхлă пайне уйрăм купана хумалла. Ăна тислĕкпе /2-3 витре çителĕклĕ/, кали, фосфор имçамĕпе /0,5 килограмм/, йывăç кĕлĕпе /1-2 килограмм/ хутăштармалла та шăтăка 50 сантиметр туличчен ямалла. Путăка йывăç шалçа çапмалла, исĕме ун çумне тĕревлемелле, тымарне лайăх хупласа тăпрапа витмелле, тӳрех 2-3 витре шыв ямалла. Тепĕр купара выртакан тăпрана хăйăрпа пăтратмалла, хутăшпа шăтăка хупламалла. Кĕркунне лартнă хунава 25-30 сантиметр çӳллĕш купалаççĕ.

ЫЙТУ – ХУРАВ

# Орхидея тымарне касмалла-и?



**Орхидея юрататăп. Лайăхрах çурăлтăр тесе икĕ çулта пĕрре унăн тымарне касмалла имĕш. Çак ĕç хăйнеевĕрлĕхĕ çинчен çырса кăтартсамăр.**

**Тамара СТЕПАНОВА.**

Орхидейăн сывă тымарĕсене тĕкĕнмелле мар. Пачах тепĕр май, парка çурăлă тата тымарлă чечек хăвăртах çеçкене ларать. Типнĕ тымара кăна касса пăрахмалла. Унăн тĕсĕ ним çинчен те каламасть. Тĕксĕмленнĕ тата пĕркеленнĕ вырăна чĕрнепе пусса пăхмалла – енчен те хытă-тăк – тымар сиенленмен. Çемçелнинчен вара хăтăлмалла – вăл текех усă кӳмĕ.

СЫВЛĂХ

# Çурăм канăççăрлантарсан

**Вĕри компресс.** Таса пусмана вĕри шывра йĕпетмелле те пăрса мăй çине хумалла. Пуçа кăштах сулахаялла пăрмалла. Çапла – темиçе хутчен.

**Вĕри валик.** Ал шăллисенчен хулăн валик чĕркемелле те вĕри шывра йĕпетмелле. Ăна ĕнсерен пуçласа купарча таран çурăм шăмми тĕлне хумалла, ăшă туйăнми пулсанах утиялпа витĕнсе 15 минутран кая мар лармалла – вĕри ытларах тытăнса тăтăр.

**Ăшă ванна.** Лăплантаракан курăксем – валериана, кĕлчечек, лаванда, мелисса – ярса ванна кĕмелле. Кашни 10 минутра вĕри шыв хушса çĕнетмелле. Çăвăннă хыççăн та выртса канмалла.

Май пур таран **зарядка** тума тăрăшмалла.

# Пуç ыратсан



**Сивĕ компресс.** Таса пусма татăкне сивĕ шывра йĕпетмелле те çамка çине хумалла. Çапла темиçе хутчен тумалла.

**Пите «шăвармалла».** Сивĕ шыва малтан хăрах тăнлав патĕнчен янах енне юхтармалла, унтан – тепĕр енчи тăнлав тĕлĕнче. Юлашкинчен çамка урлă ярса пĕр çаврăм тумалла та пите пĕтĕмпех сапмалла. Пахчара ку тĕллевпе – шлангпа, кил-çуртра алтăрпа усă курма пулать. Шыва хĕрхенмелле мар.

**Алла шывпа сапмалла.** Сылтăм алла лаппинчен пуçласа шывпа малтан çӳлелле сапса хăпармалла, унтан шал енчен – аялалла. Сулахай алă çинче те çакнах тумалла.

**Ырă шăршăллă ванна** юн куçаслăхне лайăхлатать. Шыва розмарин, мелисса, чăпăр курăкĕ ытларах ярса канса выртмалла.

ПĔЛЕС ТЕНĔЧЧĔ

# Мăк курăкĕнчен хăтăлмалла

**Панулми йывăççи мăкланма пуçларĕ. Мĕне пĕлтерет çакă? Мăк курăкне пĕтерме пулать-и?**

**Светлана В.**

Мăк курăкĕ экологи енчен таса вырăнта кăна çитĕнет. Çапах çакă йывăçшăн сиенлĕ пулăмпа çыхăнма пултарнă. Тĕслĕхрен, шартлама сивĕре унăн вулли çурăлнă е вăл ытла туратланса кайнă. Çавна май йывăç вăйсăрланать, унăн чир-чĕрпе кĕрешесси чакать. Мăк курăкĕ йывăç хуппин шăтăкĕсене хуплать, ăна сывлама чăрмантарать. Унсăр пуçне мăкланнă вырăнта хурткăпшанкă лайăххах хĕл каçать. Çавăнпах ăна хырса илмелле. Сиенленнĕ вырăна тимĕр купоросĕн хутăшĕпе /1 литр шыв пуçне 50 грамм тимĕр купоросĕ/ сирпĕтмелле. Улма-çырла йывăççисене çуркунне тата кĕркунне шуратсан мăк курăкĕ шăтмĕ.

ТĔКĔР УМĔНЧЕ

# Йĕкĕр янахран



Тăвар компресĕ йĕкĕр янахран хăтăлма пулăшĕ. Ку мел çав тери ансат. Алшăллие тăвар хутăшне /1 стакан шыв пуçне 1 апат кашăкĕ тăвар кирлĕ/ чиксе кăлармалла, пăрса янах айне хумалла, алăпа хуллен çапмалла. Ку компреса тăтăшрах тумалла.

# Ӳте нӳретме

Кĕлетке ӳтне те нӳретсех тăмалла. Килти кремпа усă курма та юрать. Ăна хатĕрлеме 120 миллилитр миндаль çăвĕ, 120 миллилитр минерал шывĕ, 4 чей кашăкĕ пыл карасĕн ăвăсĕ, 15-20 тумлам эфир çăвĕ, 12 капсула Е витамин кирлĕ. Ăваса ирĕлтермелле, миндаль çăвĕ хушмалла. Çулăма сӳнтерсен çак хутăша шывпа, эфир çăвĕпе, Е витаминпа пăтратмалла.

УСĂЛЛĂ КАНАШСЕМ

- Кайăк-кĕшĕк какайĕ çемçе пултăр тесен пĕçериччен ăна шалтан тата тултан лимонпа сăтăрмалла.
- Авăртнă типĕтнĕ кăмпа хăвăртах пиçет. Ăна яшкана та, соуса та яма пулать.
- Шалча пăрçи тутлăрах пултăр тесен вĕреме кĕнĕ шыва тăкмалла та ун вырăнне сиввине ямалла. Çавнашкалах тип çу хушма юрать.
- Майăрăн йӳçĕ хуппине çакнашкал тасатмалла: малтан тĕшше 15-20 минутлăха вĕри шыва ямалла, унтан çавăн чухлĕ вăхăтлăх духовкăна лартмалла.
- Треска шăрши килĕшмест-и? Пĕçернĕ çĕре хăярăн тăварлă шывне хушмалла.
- Пĕçерме пуçличчен пĕвере 1 минутлăха вĕри шыва ямалла, унтан сиввипе çумалла. Çулăма сӳнтериччен тин тăвар ярсан вăл хытмĕ.





КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# Халĕ пĕччен мар

Пĕчĕклех тăр пĕччен юлчĕ Ирина. Ашшĕне курман вăл. Амăшĕ качча тухмасăрах çуратнă ăна. Хĕрарăмăн шăпи вăрăм пулман. Вăхăтра сиплев пуçламаннине пула çамрăклах кунçулĕ татăлчĕ унăн. Тăванĕсем Иринăна ача çуртне парасшăнччĕ. Район центрĕнчен илмех килнĕччĕ хĕрачана. Юрать-ха ялти пĕр мăшăр шеллерĕ тăлăха. Темиçе çул пĕрле пурăнсан та йыш хушăнман вĕсен килĕнче. Çавăнпах Иринăна хăйсен хĕрĕ пекех пăхса çитĕнтерчĕç. Усрав хĕрача килте пулăшрĕ, шкулта лайăх вĕренчĕ, хушнине итлерĕ. Ах, мĕншĕн пур-ши çак тĕнчере уйрăлу? Аслă шкула вĕренме кĕнĕ çул ытла та йывăр пулчĕ Иринăшăн. Уншăн чун ăшшине шеллемен çынсем пĕрин хыççăн тепри çĕре кĕчĕç. Каллех пĕчченлĕх авăрне лекрĕ хĕр. Чун ыратни нихăçан та иртессĕн туйăнмарĕ ăна. Малашлăх пирки шухăшлас та килмерĕ унăн. Йывăр вăхăтра юлташĕсем нумай пулăшрĕç.

Сашăпа паллашни чĕрĕлĕх кĕртрĕ Иринăн пурнăçне. Икĕ студент пушă вăхăта пĕрле ирттерме тăрăшрĕ. Юрату кунран кун вăйланса пычĕ. Асамлă çав туйăм хăват хушма пулăшрĕ Иринăна. Кĕçех иккĕшĕ общежитире пĕр пӳлĕмре пурăнма пуçларĕç. Сашăн амăшĕ апатçимĕçпе тивĕçтерсе тăчĕ, ывăлĕшĕн укçа-тенкĕ те шеллемерĕ. Пулас кинне ăшшăн йышăнчĕ хĕрарăм.

Аслă шкулта вĕреннĕ вăхăтрах пĕрлешрĕç вĕсем. Студентсен туйĕ ытла та шавлă иртрĕ. Юлташĕсем телейлĕ мăшăра ăмсанса сăнарĕç. Çĕн çынсем пĕр-пĕрне ĕмĕр юратма сăмах пачĕç.

Хулара хăйсене ятăн кĕтес илеймерĕ çамрăк мăшăр. Ĕнерхи студентсен укçа ăçтан тупăнтăр? Ĕçе вырнаççан та тӳрех кредит памаççĕ. Çавăнпах алла диплом илсен яла вăхăтлăх куçрĕç хайхисем. Иринăн çие юлчĕ. Çакă хăйне те, мăшăрне те, хунямăшне те хăпартлантарчĕ.

Саша хулара ĕç тупрĕ. Ирина хунямăшĕ çине тăнипе ялтах юлчĕ. «Ача кĕтекен хĕрарăма килте лайăхрах», – терĕ хĕрарăм.

Малтан кашни эрнерех килсе çӳрерĕ упăшки. Канмалли кунсенче пĕрре те ĕççĕр лармарĕ вăл. Вăхăт иртнĕçемĕн эрне сиктерсе, каярахпа уйăхра пĕрре килме пуçларĕ. Çитменнине тата арăмĕнчен сивĕнчĕ.

«Саша хулара урăх хĕрарăм тупнă», – çиçĕм хăвăртлăхĕпе сарăлчĕ ялта хыпар. Мĕнле апла? Арăмĕ килте кĕтнĕ çĕртех тепринпе киленĕç шырать-и вăл? Ирина каççерен куççуль юхтарчĕ, йыш хушăнсан упăшки улшăнасса кĕтрĕ.

Ывăлпа хĕр çуратрĕ çамрăк арăм. Вĕсене пурнăçран ытла юратрĕ. Тĕпренчĕксен ашшĕ те пĕр хушă киле тăтăшрах килсе çӳрерĕ. Анчах çынсем каланă тăрăх, çав хĕрарăмран хăпса пĕтеймерĕ вăл. Вăхăта çемйипе ирттерме палăртнă çĕртех хулана тухса вĕçтерчĕ. Ялта пĕчĕк ачасемпе çывăрса тăранма та май çук имĕш.

Кĕркунне килтен хулана миххи-миххипе пахчаçимĕç турттарчĕ арçын. «Пĕччен ун чухлех çисе ярас çук эсĕ. Çич юта тăрантарма пахчаран тухмасăр ĕçлетпĕр-и эпир?» – амăшĕ каланине те хăлхана чикми пулчĕ ывăлĕ.

Ирина та аякка-аякка тухса тарĕччĕ те... Анчах унта ачисене çитĕнтермешкĕн кам пулăшĕ ăна? Çапах телейлĕ Ирина. Вăл тĕпренчĕкĕсене çут тĕнче кăтартнă. Халĕ вĕсемшĕн чи кирлĕ çын амăшĕ. Ирина текех пĕччен мар.

**Екатерина ЦВЕТКОВА.**

ÇЫРУ ÇЫРТĂМ ВАСКАСА

# Таврăнмастăп...

Куççуль витĕр, чун кӳтсе çитнĕрен çыратăп çак çырăва. Ăçтан, мĕнрен пуçламаллине те пĕлместĕп. Çак тарана çитсе хам пурнăçра нимĕн ыррине те курман тесен те йăнăш пулмĕ. Хĕвеллĕ кунсăрах мар, паллах, унашкалах пулма та пултараймасть, анчах та ăмăр çанталăкĕ пурнăçăмра çавах ытларах пек туйăнать. Икĕ ача манăн. Ялта ĕç çуккипе упăшка тăваттăмĕш çул ĕнтĕ Мускава çӳрет. Тилĕ пекех чеескер вăл. «Сирĕнпе кредит илме йывăр, атя уйрăлатпăр, кайран каялла çырăнăпăр», – сăмах пуçарчĕ пĕррехинче. Эпĕ, айванкка, халĕччен никама суйса курманскер, çынна йăлтах ĕненекенсер, пĕр шухăшсăр килĕшрĕм. Кермен пек çурт лартрăмăр, ăна, паллах, хăй çине çеç çыртарчĕ. Малтанхи икĕ çулне шăп çеç пурăнчĕ, халь кăштах хирĕç чĕнсен те: «Тухса кайăр, ку пӳрт сирĕн мар», – кирек хăш вăхăтра урама хăваласа кăларса ярать арçын. Шартлама сивĕре шăнса вилесрен кӳршĕсен чӳречинчен кайса шаккани пĕрре мар пулнă. Тĕк май çеç шăлса ывăнтăм. «Ан чĕн, чĕлхӳ ытла вăрăм, эсĕ маншăн никам та мар», – çакнашкал каласа мĕскĕнлетнине пĕрмай епле чăтмалла? Хуçалăхĕ питĕ пысăк пирĕн, картиш тулли выльăх, пахчаçимĕçне те чылай туса илетпĕр. «Кам тăрантарать сана, кама кирлĕ эсĕ, эпĕ пулмасан выçă вилетĕн, ĕçлемесĕр йăлтах шыçăнса кайрăн», – çăкăр татăкĕпе çăвартан тĕксех кăшкăрать тепĕр чухне. Сахал укçа тӳленĕрен тирпейлӳçĕ ĕçне нимĕн вырăнне те хумасть вăл. Турă ăçтан çавăн чухлĕ чăтăмлăх панă-ши мана? Тӳсетĕп, анчах та юлашки хут хăçан йăл кулнине, тĕкĕр çине пăхнине пачах та астумастăп. Вăл мана тахçантанпах укçа тыттарса курман. Анне патне кайса килмелле чухне бензиншăн хамах тӳлетĕп. «Саншăн машина тапратса тухрăм, хамшăн мар», – куçран пăхсах кулать манран. Кӳршĕ района çитмешкĕн ирĕксĕрех 300 тенкĕ кăларса тыттаратăп. Юлашки вăхăтра иртĕхсех çитрĕ. Апатçимĕç туяннине пачах та курман ăна. Киле çитсен: «Паян мĕн çиетпĕр эпир?» – йĕкĕлтешсе ыйтни чĕрене татса илет. Вĕри апат пулмасан вăрçă тухасси паллă. Тулли турилккене сĕтел çине лартса пани кăна çителĕксĕр. «Ларса çи, ку сан валли», – темелле-мĕн çепĕççĕн. Унсăрăн пăсланакан яшкапа пеме те пултарать. Тăхтаманран усалрах çын паянхи саманара та пур. Çук, наркăмăш яшки вĕретместĕп эпĕ. Усал та сунмастăп, ылханмастăп та. Турри хăех курать. Укçа пĕтсен çынран кивçен илетĕп, кайран аран-аран тавăркаласа паратăп. Унăн ман валли пĕр тенкĕ те çук, машина валли çĕнĕ урапа туянмалла, кредит тӳлемелле е шăлне юсаттармалла, санаторире сипленмелле. Пĕррехинче алимент тесе çăвар уçрăм та, эрнипех кăвак куçпа çӳрерĕм. Лавккана хăш чухне пĕрлех кĕретпĕр, эпĕ апат-çимĕç туяннине вăл алăк патĕнче сăнаса тăрать. «Арçынну сана укçа памасть, нимĕнпе те пулăшмасть, пачах та çын вырăнне хумасть, хăçанччен чăтса пурăнасшăн?» – хытах ятлаçать аппа. Отпуск укçи илнĕ хыççăн кăçал çулла ачасемпе Чулхулана кайрăмăр. Çул çинче упăшка кофе ĕçме чарăнчĕ. Ман пĕчĕк ывăлăмсен те машинăра ларса юлас килмерĕ, сĕткен ĕçме эпир те пĕрле кĕрес терĕмĕр. Упăшка черете тăма ĕлкĕрнĕччĕ. Хăйне валли кофе илчĕ те сĕтел хушшине вырнаçрĕ. Пĕчĕкскерсен ăна та, кăна та активсе пăхас килет. Енчĕк тĕпĕнчи укçапа панулми сĕткенĕ, чей, кукăльсем туянтăм та упăшкапа юнашар кайса лартăм. «Ман валли кукăль туянма çукчĕ-им?» – хаяррăн пăхрĕ хайхискер. «Хăв мĕншĕн илмерĕн тата?» – çăвар уçма çеç ĕлкĕрнĕччĕ, кофе юлашкипе питрен чашш! сапрĕ. Çук, ĕçесси-çиесси пулмарĕ, ачасен те кăмăлĕ пăсăлчĕ. Куççулĕме чарайманрăм, питçăмарти тăрăх юхрĕ те юхрĕ. Эпир урама тухнă çĕре çукчĕ ĕнтĕ вăл. Икĕ ачапа çул çинче пăрахса хăварчĕ. Кăшкăрса йĕрекен ывăлăмсене лăплантарма тăрăшрăм. Тавах Турра, мĕнпур ваккине пуçтарсан таврăнмалăх укçа тупăнчĕ. «Чĕлхӳне чармаллаччĕ, ытлашши иртĕнсе кайнă, киле кĕртместĕп паян», – çухăрашрĕ телефонпа шăнкăравласан. Каçа хирĕç икĕ ачапа ăçта каймалла? Юрать, хĕр тантăшăм йышăнчĕ, ун патĕнче чиперех çĕр каçрăмăр. «Каçару ыйт, вара кĕреетĕр киле», – ирех шăнкăравларĕ хайхискер. Çук, ниепле те ăшшăн калаçаймарăм унпа. Мĕншĕн каçару ыйтмалла-ха ман, аслă çул çинче пăрахса хăварнăшăн-и? Хатĕр-хĕтĕре пуçтармасăрах ачасемпе анне патне çул тытрăм. Çывăх çыннăм тахçанах пĕччен пурăнать. «Пурин валли те вырăн çитет, халь тин çынна улăштараймăн, пурăнăр кунта, кайран куç курĕ», – ăс пачĕ ватă анне. Пĕлетĕп, унăн та чĕри ыратать, кашни амăшĕ ывăлхĕрне лайăх пурăнтарасшăн çунать. Тепĕр эрнеренех çĕнĕ ĕçе вырнаçрăм. Нимĕн те кирлĕ мар мана унран. Кермен пек çуртĕнче пĕччене сарсалантăр. Тепре авланасси те хăратмасть. Лăпкă пурнăçа нимĕн те çитмест иккен. Тем пек ӳкĕтлесен те каялла таврăнма килĕшместĕп. Чура пулса йăлăхрăм. Ачамсем ашшĕне аса та илмеççĕ. Тутлă çимĕçпе хăналакан кукамăшĕ патĕнче килтинчен темиçе хут лайăхрах вĕсене. Япăххи пирки çырас килместчĕ те, сирĕн хаçата алла тытсан чун чăтмарĕ. Ман пек шăпаллисем çак çĕр çинче татах та пур-ши? Эпĕ тинех ăнланса илтĕм, арçынсене хамăртан култармалла мар. Çак çĕр çине телей курма çуралнă тăк мĕншĕн асапланса пурăнмалла?

**НАДЕЖДА.**

АХ, АНЧАХ...

# Аркатакан кĕвĕçӳ

Мана савни асăрхами пулчĕ. Иртсе кайнă чухне сывлăх сунатăп – чĕнмест, телефонпа шăнкăравлатăп – тытмасть, СМС çыратăп – хуравламасть. Мана клубра пĕр каччăпа юнашар тăнине курнă та кӳреннĕ иккен. Курăр-ха – сăмсине уснă, тутине тăснă. Ун хыççăн чупмалла-и тата? Кĕтсе илеймĕ. Çакăн хыççăн темшĕн юратнă çынран чун сивĕнчĕ. Вăл маншăн чи-чи лайăххи пулма пăрахрĕ. Пулни-иртни çиййĕнчех куç умне тухрĕ, чĕрене ыраттарчĕ.



«Кунĕн-çĕрĕн сан çинчен шухăшлатăп. Хытă юрататăп, сансăр пурăнаймастăп», – теттĕн. Мĕн улшăнчĕ-ха унтанпа? Эпĕ сана никампа та улталаман. Çав каччăпа ыталашман, чуптуман. Киле те ăсатман вăл мана. Эх, кĕвĕç эсĕ. Кирек хăш яшпа ăшшăн калаçнине курсанах кăмăлсăрланаттăн, пăрăнса утаттăн. Нихăшĕнпе те вăрттăн тĕлпулма палăртман. Санпа кăна хутшăнмалла-и? Ун пек май çук – эпир çĕр çинче иккĕн çеç мар вĕт, йĕри-тавра – халăх.

«Хĕрарăмăн кил ăшшине упрамалла, унăн çын хушшине тăтăш тухмасан та юрать», – теттĕн. Тăвата стена хушшине хупса хурасшăн-и мана? Эпĕ санăн сăмаххусене шӳт вырăнне йышăннă. Халь тин эсĕ чăнласа каланине ăнланса илтĕм. Уявра юрласа ташлани те килĕшмест сана. Чим, çак тарана çитиччен мĕн парнеленĕ-ха эсĕ мана? Пĕрре кӳршĕн пахчинчен чечек татса панăччĕ. Тепрехинче йӳнĕ канфет çитернĕччĕ. Çав вăхăтрах тантăшсене савнийĕсем телефон та, ылтăн эреш те, ноутбук та илсе панă. Эсĕ çеç кашни пуса перекетлеттĕн. Ăшă сăмахсемпе манăн пуçа çавăртăн-ши? Чунранах каланă-ши вĕсене? Иккĕленетĕп.

Пĕрре телефона вăрах тĕрĕслерĕн. Каччăсен номерĕсене кăларса пăрахма хушрăн. Мĕншĕн? Эпĕ нихăшĕнпе те юратулла вылямастăп. Тепĕр тесен, мĕнле хăятăн эсĕ маншăн чикĕ ларма? Мана хушма, вĕрентме, чарма ирĕк пур-и санăн? Паллах, çук – эпир мăшăрланман-çке. Çемье çавăрасси пирки шухăшламан та.

Уçă кĕпесене те шкапран кăларман. Вĕсем сана килĕшмеççĕ. Унашкал çи-пуç каччăсене астарать имĕш. Темле çав. Мĕншĕн çавнашкал тумтир çĕлеççĕ вара? Хĕрарăмсем те черет тăрсах туянаççĕ-суйлаççĕ. Хăшне-пĕрне упăшки те илсе парать ахăр.

Йăлтах йăлăхтарчĕ. Санăн сĕнӳ-канашу мана текех кирлĕ пулмĕ. Акă ыранах хулана вĕçтерĕп. Кĕлеткене çат тытакан кĕске çи-пуç тăхăнăп. Эпĕ вылянчăк шухăшлă хĕр мар вĕт, мана çакăншăн никам та ӳпкелеймĕ.

Тинех аса илтĕн-и мана? Пĕр вĕçĕм шăнкăравлатăн, çыратăн... Çĕрле те канлĕ çывăрма памастăн. Каçар, текех кĕтместĕп. Манăн санпа калаçма кăмăл та çук. Тавах пĕр хушă манпа хутшăнманшăн. Сана хак пама вăхăт пулчĕ. Сывă пул, нимшĕн те ан кӳрен. Кĕвĕçӳ йăлтах аркатнине эсĕ хăв та пĕлетĕн. Улшăнăн-ши хăçан та пулсан? Тен, урăххипе телей тупăн?

**Лира ЛЕВОЧКИНА.**

# Мĕн чухлĕ тăшман ман, мĕн чухлĕ юлташ!

/Кăçал çырнисенчен/

**Валери ТУРКАЙ**



* * *

Мĕн чухлĕ тăшман ман,
мĕн чухлĕ юлташ!
Апла эп чăнах та хăватлă чăваш!
Аван пурăнма тăшмансемсĕр,
паллах!
Çапах та этемĕн тăшман
пулмаллах.

Мĕн чухлĕ юлташ ман,
мĕн чухлĕ тăшман!
Апла хальлĕхе чунăма эп сутман.
Апла мĕскĕн мар эп,
апла кĕлмĕç мар.
Апла чăн-чăн Çын эп, апла
чăн-чăн Ар!
**31.01.15**

## Валери Туркай хăйне хăй йăпатма хăтланни

– Йывăр-и?..
– Йывăр. Тунмастăп.
Йывăр кăна та мар пуль...
Пуç ахальтен шуралмасть вăл.
Кăлăх юхмасть вăл – куççуль.

– Йывăр-им?..
– Йывăр. Тунмастăп.
Йывăр мана кăна мар.
Мĕн, хĕвеле-им пит çăмăл
Çак тĕнчене çутатма?

Е çăлкуçа йывăр мар-и
Хулăн чула шăтарма?
Тен, Атăла питĕ çăмăл
Пĕр чарăнмасăр юхма?

Е çак юман авăнман-и
Урнă çилсем алхассан?
Вăл, мĕн, куççуль юхтарман-и
Тураттисем хуçăлсан?..

– Йывăр-и?
– Йывăр. Тунмастăп.
Йывăр пушшех те ку чух.
Те хам ытла халран кайрăм?
Те шеллекен мана çук?

Те шанчăка эп çухатрăм –
Йăпăртлăха, пĕр куна?
Йывăр, чăнах та пит йывăр
Шанчăксăр юлнă чуна.

– Йывăр-им?
– Йывăр. Тунмастăп.
Ку вăл иртет ыранах.
Сăвă эп çыртăм, туссемĕр!
Эп халь пин хут вăйлăрах!
**30.06.15**

## Айхи

Халь – ахлатаççĕ, пуç таяççĕ...
Ăçта пăхан унта – Айхи.
Тахçан вара шута хумастчĕç –
Унран çук тейĕн япăххи.

Тахçан вара шартах сикетчĕç,
«Айхи» тесессĕн пĕрисем.
«Айхи» тесессĕн шăл еретчĕç
Тӳрех – «ытла та ăслисем».

Вăл нумая пит хапсăнмастчĕ,
Çунмастчĕ мулшăн вăл пачах.
Юлашкине çынпа пайлатчĕ...
Ачаччĕ вăл, чăн-чăн ача!

Айхи, Айхи! Чăваш Кĕтречĕ!
Эс тăсрăн Хусанкай ĕçне!
Эс халăха йăлт халалларăн –
Таса чунна та чĕрӳне!

Епле эс сăввуна калаттăн!
Епле юрлаттăн юрруна!..
Турра паян эп тав тăватăп –
Эп курнă хам куçпа çакна.

Чапу сан инçене саланчĕ.
Анчах, кайма вăхăт çитсен,
Тăван ялна манмарăн эсĕ,
Шутларăн Чăваш Ен çинчен.

Вăл инçе мар – Çĕньял масарĕ –
Юр пек шап-шур Шупашкартан...

Тавах сана, тавах, Çĕньялăм,
Маттур Арушăн тав чунтан!

... Вăл инçе мар –
Çĕньял масарĕ –
Юр пек таса Шупашкартан.
Çав масарта пур çутă палăк.
Айхи выртать çав масарта...

Ан тив, ахлатчăр халь,
пуç тайччăр.
Тен, ку паян темрен пахи?..
Чунне вăл халăхшăн çунтарчĕ.
Ак мĕншĕн вилĕмсĕр Айхи!
**01.07.15**

* * *

Сана суйса курмарăм,
тăван халăх,
Утмарăм эпĕ такăр сукмакпа.
Хăш чух юрларăм –
чунăм йăпанмалăх,
Хăш чух вара вылярăм
пуль вутпа...

Суякансем йĕри-тавра пайтахчĕ.
/Паян, мĕн, пит сахал-им
çавскерсем?/
Сăмахĕпе вĕсем ялан санпаччĕ,
Пач урăхлаччĕ ĕçĕ-хĕлĕсем.

Пĕлетĕп: авалтан çапла ку пулнă,
Пĕлетĕп: пулĕ ку ялан çапла.
Пĕри вутра, ав, тĕрĕслĕхшĕн
çуннă,
Тепри мул пухнă ултавне пула.

Этем чĕришĕн çĕр çинче
çук канлĕх.
Ялан суйлать çын хăйĕн
сукмакне.
Çитсессĕн вăхăт ятăм, тен, çухалĕ,
Куççуль тумлатмĕç тек
тăпрам çине...

Çапах çут сывлăм пек таса
ман чунăм
Сан умăнта, ман халăхăм, ялан –
Пĕр саншăн çеç çак çĕр
çинче вăл çуннă.
Сан ыр ятна эп, халăхăм, яман.
**26.08.15**

## Шуршăл кăйкăрне

*Шуршăлти Космонавтика музейĕн ырă пирĕштине Зоя Антоновнана*

Кунсем-çулсем вĕçе-вĕçе
иртеççĕ.
Хăш чух пĕр çул – пĕр самант
пек кăна.
Çынсем çаплах пуçне тайма
килеççĕ,
Мухтавлă, паттăр Андриян, сана.

Манмасть сана тăван ялу –
ват Шуршăл.
Çавал та Атăл яланах санпа.
Сан тĕп килӳ тăмасть пĕрре
те пушă –
Кĕтет пурне те ăшă кăмăлпа.

Кунта ватти те, çамрăкки те –
харсăр.
Кунта тапаççĕ хыттăн чĕресем.
Кунта инçе çулран пач хăрамасăр
Ӳсеççĕ çĕнĕ чăрсăр кайкăрсем.

Китай çынни пуçне тайса
пĕр хуша
Тăрать, ак, шăппăн
юнашар манпа.
Кунтах – француз... пуриншĕн
те эс, Шуршăл,
Паян пĕрех чи çутă çăлтăрпа.

... Кунсем-çулсем иртеççĕ те
иртеççĕ.
Хăш чух пĕр кун – пĕр самант
пек кăна.
Çынсем çаплах пуçне тайма
килеççĕ,
Мухтавлă, паттăр Андриян, сана.
**05.09.15**

## Ĕç çынни

*Чăваш Республикин ертӳçи М.В.Игнатьев 2016 çула Ĕç çынни çулталăкĕ тесе пĕлтернĕ хыççăн çуралнă сăвă*

Ĕç çыннин çулталăкĕ!..
Еплерех янрать!
Ĕç çыннин çулталăкĕ –
Чунăм савăнать!

Кам-ши, кам вăл – ĕç çынни?
Эс вăл, эп, тепри!
Ан пăрахтăр хĕмленме
Ĕçлĕ çын чĕри!

Ан ӳркенĕр пуç тайма
Ĕçлекен çынна!
Тав тусамăр юратса
Яланах ăна!

Çурт ӳсмест хăй тĕллĕнех,
Хир – сухаланмасть.
Улмуççи те, пăхмасан,
Панулми памасть.

Аркатма – ăс кирлĕ мар,
Кирлĕ – çурт тума,
Кирлĕ – çутă тĕнчене
Хӳхĕмрех тума.

...Ан ӳркенĕр пуç тайма
Ĕçлекен çынна!
Тав тусамăр яланах
Юратса ăна!
**07.09.15**

## Кĕрхи сăвă

Мĕне мана кирлĕ кун пек
кĕрхи кун?
Ку пĕлĕт, ку тунсăх, ку çумăр?
Капла та пăрланнă шăнса
манăн чун,
Капла та мана питĕ йывăр.

Тин çеç-ха хĕвел
хĕмленетчĕ çӳлте,
Тин çеç-ха тӳпе тинĕс пек
кăн-кăвакчĕ.
Инçе вĕçтереттĕмччĕ эп ĕмĕте,
Чĕрем ман хăватлăн тапатчĕ.

Тин çеç-ха, тин çеç-ха,
тин çеç-ха, тин çеç
Мана пĕрисем уççăнах
ăмсанатчĕç!
Тин çеç-ха çиçетчĕ
хĕлхем куçсенче,
Мана çут тĕнче çăтмах
пек туйăнатчĕ!..
...Йăлтах иртсе кайрĕ,
йăлтах халь – хыçра:
Таса ĕмĕтсем те,
хĕрӳ туйăмсем те.
Хура кĕркунне çеç
халь ман чунăмра.
Эп кив çурта пек
пĕр ӳпкевсĕр сӳнетĕп...

...Çапах та эп çиçрĕм,
хĕмлентĕм тахçан!
Эп шантăм, ĕнентĕм, юратрăм!..
Кăштах шанчăк пар, кĕрхи кун,
эс мана –
Эп тин пурăнмашкăн пуçларăм.
**11.09.15**

* * *

Пайтах çылăха эпĕ кĕтĕм
Çур ĕмĕр ытла пурăнса.
Хăш чух каçармашкăн пĕлмерĕм
Манран каçару йăлăнсан.

Хăш чух тав тума эпĕ мантăм
Çынна – хама ырă тусан.
Тем пек ăна халь тав тăваттăм –
Мĕн тăван çынни çук пулсан?..

Хăш чух ыр çыннах «япăх»
терĕм,
Пуç тайрăм хăш чух йĕксĕке.
Сăмах хушмаллаччĕ – чĕнмерĕм,
«Килте кирлĕ, – терĕм, –
йĕрке».

Хăш чух ытлашши эп калаçрăм,
Пĕлмерĕм чарма чĕлхене.
Хăш чух пĕлĕше паллаймарăм –
Амантрăм эп çын чĕрине...

... Пайтах çылăха эпĕ кĕтĕм
Çур ĕмĕр ытла пурăнса...
...Кăштах çăмăлрах-мĕн –
тин пĕлтĕм –
Хăв çылăхлине ăнлансан.
**03.09.15**

* * *

Пыйтă слон пулма шут тытнă.
«Пыйтă мар, – тет, – эп текех!
Акăш-макăш шар кăтартăп
Мана пыйтă тесенех!

Эп – Çĕр чăмăрĕн илемĕ!
Пуç таять хĕвел мана!
Эп пуртан эсир телейлĕ,
Чи асли – пĕр эп кăна!

Кам манпа вăйне виçесшĕн?!
Кам мана савмасть чунтан?!
Тухас çук хĕвел тек уншăн,
Пурнас çук вăл паянтан!

Эп ярса кăна пусатăп –
Кисренет çĕр çийĕнчех!
Тинĕсрен хăватлă эпĕ,
Çӳллĕрех сăрт-тусенчен!..»

...Пыйтă слон пулма шут тытнă,
Анчах тахăшĕ ăна
Чĕрнипе пусса тĕп тунă.
Питĕ шел мăнтарăна!
**06.09.15**

## Кĕтӳç

*«Кĕтӳç ларать сăрт çинче» Юрăран*

Эп те ларнă сăрт çинче
Пĕчĕк чух, тахçан.
Эп те пăхнă ял енне
Хырăм выçнăран.

Эп те кĕтнĕ пĕчĕк чух
Ялăн кĕтĕвне.
Эп те пĕлнĕ ачаллах
Çăкăрăн хакне.

Чăтнă, тӳснĕ пĕтĕмпех,
Пĕртте нăйкăшман,
Шăрăхран та тăвăлран
Хăраса тăман.

Эп киленнĕ шуçăмпа.
Çутă сывлăмпа
Пите çунă ирсерен
Савăк кăмăлпа.

Пулнă манăн тусăмсем –
Улăх-çарансем.
Маншăн çурнă çеçкине
Утмăлтуратсем.

Эп калаçнă юманпа
Чунăма уçса,
Ларса каннă ун айне
Пит халран кайсан.

Тăван ялăм савнине
Туйнă эп ялан,
Ун таса пархатарне
Асăмран яман.

Халь те хатĕр эп тухма
Улăха ирпе.
Халь те хатĕр пит çума
Сывлăм шывĕпе.

Халь те хатĕр эп ларма
Çӳллĕ сăрт çинче –
Пултăр çамрăклăхăм ман
Куçăм умĕнче.
**07.09.15**

## Çырăнман сăввăмсене

*Арсений Тарасова*

Эсир мана каçарăр –
çунатлăскерĕмсем...
Эсир мана каçарăр –
çуралайманскерсем...
Сире эп çыраймарăм
хĕвел ытамĕнче,
Сире эп çыраймарăм
çут çăлтăр айĕнче.

Хăш чух тӳлек те канлĕ
тапатчĕ ман чĕре,
Хăш чух унран кăри те
тек çукчĕ тĕнчере...
Паллах, ман тытмаллаччĕ
хур тĕкĕ аллăма,
Паллах, ман çырмаллаччĕ
чи чаплă сăввăма.

Паллах, ман вĕçмеллеччĕ
мăнаçлă кăйкăр пек,
Паллах, ман çиçмеллеччĕ
тин тивнĕ çăлтăр пек...
Анчах пулмарĕ пулĕ вĕçме
ман вăй-хăват,
Анчах çитмерĕ пулĕ çиçмешкĕн
пĕр самант...

Сире эп çыраймарăм –
çунатлăскерĕмсем...
Мана эсир каçарăр –
çуралайманскерсем...
**06.05.15.**



### Пурте юратнă Будулай рольне калăпланă Михай Волонтир 82 çула кайса ĕмĕрлĕхех куçне хупнă

# Совет киновĕн тĕп чиканĕ

Пирĕн çĕршывра – арканиччен – ун пирки "совет киновĕн тĕп чиканĕ" тенĕ. Михай Волонтир патне янă çырусене "Кино. Будулая" тесе кăна çырнă, çапах та вĕсем адресата шыраса тупнă. Молдави актерĕ 120 ытла роль калăпланă пулин те халăх асĕнче Будулай Романов яланлăхах упранĕ.

**Романтик**

Халăх юратакан артист учитель те пулма пултарнă. Волонтир педучилищĕрен вĕренсе тухнă, кĕçĕн классене вĕрентнĕ. Михай мĕн пĕчĕкрен пултарулăхпа палăрнă. Илемлĕ пултарулăх пĕр конкурсĕнче ăна асăрханă, Наци театрне чĕнсе илнĕ. Текех çакăнтан ниçта та кайман вăл, чапа тухсан хăйне ытти çĕре чĕнсен те тăван коллективран пăрăнман.

**Идеал шайĕнчи сăнар**

Кинора пĕрремĕш хут 1968 çулта "Нужен привратник" фильмра ÿкерĕннĕ. Каярахпа ытти ĕçсем çуралнă: "Это мгновение", "Крутизна", "Это сладкое слово – свобода"... 1976 çулта "Дмитрий Кантемир" фильмри рольшĕн Молдави ССР патшалăх премине тивĕçнĕ. Пурĕ 40 ытла фильмра ÿкерĕннĕ артист. Анчах Будулай чапне пĕри те хуплайман.

Молдави паллă режиссерĕ Николай Гибу каланă тăрăх, паллă сериала Одесса киностудийĕнче мар, "Молдова-фильмра" та ÿкерме пултарнă. Анчах та ун чухнехи ертÿçĕсем çак шухăша ырламан: "Молдавансене капла та чикансем тесех йышăнаççĕ. Мĕншĕн хамăр çинчен ытлашши калаçтармалла?" Çапла сценарие йышăнман. Идеал шайĕнчи сăнара калăплакана вăрах шыранă. Николай Сличенкона та чĕннĕ, Армен Джигарханяна та. Лучко таçтан Волонтира аса илнĕ. Вĕсем иккĕшĕ Николай Гибу ÿкернĕ "Корень жизни" фильмра пĕрле вылянă. Кăтра çÿç, чалăш лартнă шĕлепке – мĕнрен чикан мар?

Фильма ÿкерме çăмăл пулман – театрта Волонтир кашни спектакльтех тенĕ пек выляннă. Вара Лучко кĕсьерен телефон туртса кăларса Молдавин Министрсен Канашĕн председателĕн заместителĕ патне шăнкăравланă – вĕсем пĕр санаторире каннă-мĕн. Лешĕ – культура министрĕ патне. Çапла аранах актер валли çур çуллăх отпуск ыйтса илнĕ.

Волонтирăн çăлтăрлă ролĕ питĕ ăнăçлă пулса тухнă – ăслă та ырă чунлă чиканăн юратăвĕн аталанăвне пĕтĕм халăх сăнанă. Сарлака пиçиххипе вăл чăн-чăн чикан пек курăннă. Куракан тимĕрçĕ пултарулăхĕ пирки иккĕленÿ ан çуралтăр тесе çак ĕçе ятарласа вĕреннĕ. Ÿкерÿ ушкăнĕнчен никам та фильм çапла ăнăçлă пулса тухасса кĕтмен. Волонтир кăна темĕнле майпа сиснĕ тейĕн – режиссера хăйĕн сăнарне чĕрĕ хăварма ыйтнă. Кĕтмен çĕртен унпа роман авторĕ Анатолий Калинин та килĕшнĕ. Çапла сценарие улăштарнă, Будулая чĕрĕ хăварнă.



• МĂШĂРĔПЕ ТАТА ХĔРĔПЕ.

Фильм пуçланнă вăхăтра урамсем пушана-пушана юлнă. Клавдипе Будулай телейĕшĕн миллион-миллион çын пăшăрханнă. Телекурава миххи-миххипе çыру килнĕ – сериала тăсма ыйтнă. Çапла 1986 çулта "Возвращение Будулая" çуралнă. Куракан актер хушаматне те ас туса юлман – пуриншĕн те вăл Будулай пулса тăнă.

Артист патне каярахпа нумай-нумай çул та чикансем тав тума пынă. Волонтир патне хĕрарăмсенчен пуххи-пуххипе çыру пынă. Анчах та арçын ĕмĕр тăршшĕпех арăмĕпе, Бельцы театрĕн актрисипе Ефросиния Добындэпе, килĕштерсе пурăннă. Клара Лучкопа иккĕшĕн пирки сарăлнă сăмах-юмах та çемье телейне аркатайман.

**Юлашки юрă**

Питĕ нумай ĕçре ÿкерĕннĕ пулин те Волонтир фильмографийĕнче начар сăнар çук.

Хăйĕн фильмне ÿкериччен пурпĕр пурăнасса ĕненнĕ актер. Кишиневран 60 çухрăмра вырнаçнă мăнастир çывăхĕнчи вăрманта иртнĕ ачалăхĕпе пĕр кĕвĕллĕ сценарие тахçанах çырса хатĕрленĕ вăл. Молдова кинематографисчĕсен союзне кашни çул укçа ыйтса çыру çырнă, пулăшма тилмĕрнĕ. Николай Гибу режиссерпа иккĕшĕ чиновниксен пÿлĕмĕсене 5 çул çÿренĕ. Вĕсене пулăшма шантарса Патшалăх кинове те, культура министрĕ те сăмах панă. Правительство комиссине те йĕркеленĕ. Волонтира тепĕр хут вăй кĕнĕ. Вăл сценарие тÿрлетнĕ те тÿрлетнĕ. Çак фильма куракан патне çитерес ĕмĕтпе пурăннă. Шел те, ĕмĕтне пурнăçа кĕртеймен. Юлашкинчен вĕсене укçа уйăрса памассине пĕлтернĕ. Волонтир пусăрăннă, тĕнчерен уйăрăм пурăнма тытăннă. Çитмĕл çулне çынсемпе пĕрле уявлама та килĕшмен вăл. Театрта çав кун бенефис йĕркеленĕ, анчах та Михай Волонтир сцена çине тухман. "Çĕнĕ молдавансем" унра туй генералне кăна курнă, хăйсен уявĕсене чĕннĕ. Актера ку роль тивĕçтермен.

Юлашки хут артист пысăк экран çине 2003 çулта "Чандра" фильмра киномеханик ролĕнче тухнă. Ытти сценарисене тиркекенскер кăна мĕнле йышăннă-ха вăл? Арçын ача ĕнене çăлма ĕмĕтленнĕ-мĕн. Çак тĕллевпе Индие тарма шухăшланă – унта ĕне çветтуй чĕрчун шутланать... Çак вăхăталла Волонтир йывăр чирпе асапланнине пурте пĕлмеççĕ те – диабет куçа витĕм кÿнĕ. Актер хăй каласа кăтартнă тăрăх, вăл суккăрланнăпа пĕрех пулнă, текста ыттисем вуласа панă тăрăх кăна ас туса юлнă.

Шăпа артиста пултарулăх та, халăх юратăвĕ те кÿнĕ, сывлăх кăна пÿрмен. Авăн уйăхĕн 15-мĕшĕнче Кишиневри республика клиника больницинче Волонтир чĕри тапма чарăннă. Юлашки сывлăшĕ тухнине арçын хăй сисмен те – вăл çав вăхăтра çывăрнă, вăранмасăрах вилсе кайнă.

* * *

*Михай Волонтирпа юлашки хут тĕл пулнине "МК" ятарлă корреспонденчĕ аса илет.*

Актер мăшăрĕ ун çывăхне журналистсене ярасшăн марччĕ. Волонтир хăй те интервью пама килĕшмерĕ: "Эпĕ халăха мĕн каласшăн пулнине сăнарăмсенче шырăр..." Шиклене-шикленех ун патне репетицие кайрăм. Калаçу валли 10 минут уйăрчĕ... 4 сехет мĕнле иртнине туймарăмăр та.

2006 çул. Театрта – сивĕтмĕшри пек. Сцена çинче актерсем сывлани те курăнать. Алсиш тăхăннă май юнашар ларакан сасă режиссерĕнчен халăх театра мĕнле çÿренипе кăсăкланатăп. "Çирĕм çынна яхăн пухăнать", – пулчĕ хурав. Билет хакне ыйтмарăм та, кассăра пăхрăм – сигарет пачкинчен те йÿнĕрех. Актерсен шалăвĕ пирки калаçни те вырăнсăр. Михай Волонтирăн, илемлĕх ертÿçин, чи нумай илекеннисенчен пĕрин ĕç укçи 20 долларпа танлашать. Пенси те çав шайра. Ку – унăн хисеплĕ ячĕсемшĕн ши?.. Акă вăл – совет тапхăрĕ хыççăнхи ирĕклĕх.

Михай Волонтир вунпилĕк çула яхăн кинора ÿкерĕнмен – хурахсемпе ловелассен сăнарĕсем ун валли мар.

90-мĕш çулсенче, трибунăсем çинчен "вырăс оккупанчĕсене" питленĕ тапхăрта, Михай та политикăна явăçнă. "Çухалнă çулсем пулчĕç вĕсем", – тет актер. Кĕтнĕ ирĕклĕх халăхшăн чухăнлăха çаврăнсан Волонтир çĕршыв тăрăх концертсемпе çÿренĕ, халăх юррисене юрланă. Шăп çав вăхăтра Румынире арăмĕпе венчете тăнă.

Куç çивĕчлĕхĕ вара чаксах пынă. Кĕçех пачах суккăрланса ларнă. Ăна Санкт-Петербургри çар-медицина академийĕнче операци тунă. Çакăн валли Раççейĕпех укçа пухнă. Юратнă Румыни, актер хăйĕн çĕршывне унпа пĕрлештерессишĕн агитацилесе çÿренĕ, пĕр пус та уйăрман.

Манпа калаçнă май актер вырăсла сăмах шырани палăрчĕ. Вăл тăтăшах чаршав хыçнелле пăхса кăшкăрчĕ: "Ефросиния! Çакна вырăсла мĕнле каламалла?" Лерен хĕрарăм кĕлетки курăна-курăна каятчĕ – кĕске çÿçлĕ, шăлаварĕ те, кĕске çанăллă кофти те шалпар. Арăмĕ-ши? Миллионшар куракан пекех ун çумĕнче Клавдийăна кăна курас килетчĕ... Сериал вĕçленнĕ хыççăн халăх вĕсене сăмах вĕççĕн пĕрлештернĕ. Актрисăна урамра чарса ыйта-ыйта халтан янă: "Будулай ăçта тата?" "Киле юлчĕ", – шÿтлесе те ывăннă хĕрарăм. Юлташĕсем вара пĕр саслăн çирĕплетнĕ – вĕсен хушшинче нимĕнле роман пулма та пултарайман. Клара Лучко – хăй хакне пĕлекен суперçăлтăр.

**"Вăрман çынни"**

Чикансен юратăвĕ – вылянчăк, хăйсем вара таса хирти çил пек ирĕклĕ пулнине калаççĕ. Вĕсен ачи-пăчи те йышлă. Михайпа Ефросинийăн вара – пĕртен-пĕрре, Елена. "Пирĕн ачасем – фильмсем, – тенĕ Волонтир. – Эпир сцена çине арăмпа иксĕмĕр тухаттăмăр. Хĕрачана гастроле пĕрле илсе çÿреттĕмĕр. Сивĕре шăнасран хăраса автобус капочĕ çине лартса ăшăтаттăмăр. Пирĕн хĕр пĕрчи – чăн-чăн театр ачи". Елена дипломат çулне суйланă, Кишиневра ют çĕршыв ĕçĕсен министерствинче ĕçленĕ, хĕр ÿстернĕ: Каталина.

Мăнукĕ пирки каласа кăтартнă май актер мана театр гаражĕ патне илсе тухрĕ. Шăхăрчĕ те таçтан-муртан шурă çăмха иксе тухрĕ, актер çине сике-сике йăлт вараласа пĕтерчĕ, питне-куçне çулларĕ. Кунта йытăсен чăн-чăн Мекки иккен. Актер вĕсене çитерме кашни кунах çÿрет.

Принципсене пăхăнакан, йывăр характерлă, нумай калаçма юратман – Волонтир ĕмĕр тăршшĕпех "вăрман çынни" пулса юлнă тейĕн: туслăха хаклама пĕлекенскер, пĕр хĕрарăма кăна юратаканскер, сăмаха тытаканскер. Ку енĕпе Волонтир, чăн та, Будулай пекех.

**• Михай Волонтир 1934 çулхи пуш уйăхĕн 9-мĕшĕнче Молдавири Глинжены салинче çуралнă. Арçын ача иккĕ тултарсан ăна уйра лаптăк уйăрса панă. Унта вăл хăех лартнă, шăварнă. Ÿсерехпе лашасемпе çÿреме пуçланă. Унăн вырăнĕ лаша заводĕнче пек туйăннă, анчах та яша тÿпе илĕртме пуçланă. Шкул хыççăн çар училищине документсем панă. Анчах та лапă урине пула ĕмĕтне пурнăçлайман. Хăйăр кăларнă çĕрте ахаль рабочире те ĕçленĕ вăл. 23 çулти каччă актер пулса тăнă.**

**• 1988 çулта "СССР халăх артисчĕ" хисеплĕ ятпа чысланă. Республика /Молдова/ орденне тивĕçнĕ. Сумлă ытти награда та нумай унăн. 2000 çулта Молдавин XX ĕмĕрти чи паллă артисчĕсен пĕри пулнине палăртнă.**





## И-ХИ-ХИК

Чăтлăх. Лиана туратти çинче Багирăпа Маугли лараççĕ.

– Итле-ха, Багира, – тет Маугли. – Темĕн пулса иртет манпа: таçта çити чупса каяс, пĕр-пĕр çĕрте пытанса ларас килет: шăппăн-шăппăн... Мĕнле шухăшлатăн – юрату мар-и ку?

– Кĕркунне çитрĕ, тусăм, – Маугли çине ачашшăн пăхать Багира. – Призыв пуçланчĕ...

* * *

Психоаналитик:

– Пĕлетĕр-и, манран пулăшу ыйтма пĕр хĕр килчĕ – вăл тĕттĕмрен хăрать иккен. Эпĕ ăна çак шикленӳрен хăтарма тăрăшрăм – нимĕн хăрушши те çук кунта. Анчах та вăл хăй мĕн сăлтавпа хăранине каласа кăтартрĕ те... халĕ хам та хăратăп...

* * *

Общество транспорчĕн чарăнăвĕ. Автобус çитет. Интеллигентлă курăнакан арçын пурне те хăйĕн умĕнчен кĕртсе ярать, юлашкинчен хăй те автобуса кĕме тăрать кăна – алăк унăн мăйĕ тĕлĕнченех хупăнса ларать. Арçын автобуса чарăнма ыйтса мĕнле сăмахсемпе вăрçăннине çырсан хаçат страници те хĕрелсе кайĕ. Юлашкинчен тинех чарăнать автобус. Алăк уçăлать. Арçын салона кĕрет.

– Каçарăр. Питĕ хытă хăрарăм, – ним пулман пекех галстукне тӳрлетет хайхи.

* * *

Арçын çĕнĕ офис уçнă. Ĕçри пĕрремĕш кун. Алăкра çын курăнса кайсанах хуçа "Клиент" тесе шухăшласа телефона ярса илет: "...Çук, паян пулмасть. Çук, çук, капла та саккас нумай... Тен, уйăхран... Юрать, аван, эпĕ сире черете çырса хурăп..."

– Эсир мĕн ыйтупаччĕ? – çаврăнать хайхи тин килнĕ арçын енне. – Каçарăр, саккас питĕ нумай.

– Телефониста чĕннĕччĕ-и? Линие сыпăнтарма...

* * *

"Ĕç" тесессĕнех ăш пăтранма пуçлать... Тăварлă шывлă тинĕс хĕррине туртать... Çие юлман-ши манăн?..

* * *

– Анне, эпĕ Петьăпа выляма каям-и?

– Уй, çук, ан выля унпа – вăл начар ача...

– Апла ăна кайса хĕнем-и?

* * *

Генералăн крокодил тирĕнчен çĕленĕ атă тăхăнасси килсе кайнă. Каланă-тунă, ир-ирех пĕр рота салтак Нил хĕррине командировкăна тухса каять. Пĕр кун иртет, иккĕ, уйăх – Нил хĕрринчен пĕр хыпар та çук. Генерал чăтаймасть, самолета ларса хăй те Нил хĕррине вĕçтерет. Мĕн курать-ха унта вăл? Шыв хĕррипе шăп-шăкăрин салтак ларса тухнă, унта та кунта крокодил кĕлетки йăванать. Акă шывран черетлĕ крокодил курăнса каять. Ăна пуçĕнчен шаплаттараççĕ те çыран хĕррине туртса кăлараççĕ.

– Старшина юлташ! Кун та уринче атă çук! – кăшкăрать туртса кăлараканни.

* * *

Тивĕçлĕ канăва тухнă икĕ генерал тĕл пулнă.

– Ас тăватăн-и, Коля, пĕрремĕш тĕнче вăрçинче пире окопсенче кĕрен тĕслĕ эмел паратчĕç – хĕрарăм пирки ан шухăшлаччăр тесе?

– Паллах, ас тăватăп.

– Вăт çав эмел халĕ кăна витĕм кӳме пуçларĕ мана.

* * *

Виçĕ салтак тĕл перес енĕпе ăмăртать. Акăлчан икçĕр метртан шăрпăк курупкине персе тивертет. Француз çӳлелле укçа ывăтма ыйтать. Перет – лектерет. Вырăс пурне те шăпланма хушать.

– Итлĕр: ӳпре вĕçет! Илтетĕр-и?

– Илтетпĕр!

Вырăс перет – ӳпре çаплах нăйласа вĕçет.

– Лектереймерĕн! – савăннă лешсем.

– Вĕçме вĕçет-ха та, анчах та нихăçан та савăшаймĕ! – тет вырăс.

* * *

Икĕ арçын пулă тытса ларать. Вăхăт иртет, пĕрин те туртмасть.

– Эсĕ манăн арăм патне çӳретĕн теççĕ. Ай, лайăх мар, – тет пĕри ларсан-ларсан.

– Сире ăнланса пĕтерме çук, – хуравлать тепри. – Вăл "лайăх" тет, эсĕ вара – "япăх"....

* * *

Арçын пулла кайнă. Пĕччене ларать хайхи çыран хĕрринче, кичем, пулă та туртмасть. Хайхи пĕрле илсе килнĕ кĕленчине пуçлать. Вăлта хулкки çине пăхса ларнă май черкке хыççăн черкке пушатать. Акă кĕленчи пушанса та пырать ĕнтĕ. Çак самантра вăлта хулкки шыва путать. Туртать! Туртса кăларать – пĕчĕкçĕ кăна караç. Мĕн тумалла унпа? Хайхи тытать те çăварне кĕленчерен пĕр-икĕ тумлам тумлатать, унтан пулла каялла шыва ывăтать. Хăй çав вăхăтра пĕчĕккĕн киле пуçтарăнма пуçлать. Ак хайхи, вăлта хулкки пĕр чарăнми шыва путма тытăнать, арçын кăларса та ĕлкĕреймест. Витре тулсан хавас кăмăлпа килелле утать хайхи. Çак вăхăтра витрере пăшăлтатса ятлаçни илтĕнсе каfive:

– Вăт мур караçĕ! Вăт сана "Ярса параççĕ!!!", "Каялла яраççĕ!!!"

## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### СУТАТĂП ПРОДАЮ

**2.АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ,** пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 28 руб., 9х20х40 – 24 руб. Высокое качество. Доставка манипулятором. **Т. 8-960-307-31-51.**

**3.АКЦИЯ! ПЕСОК, ГРАВМАССУ,** щебень, керамзит. По низким ценам. Доставка. **Т. 8-960-307-31-51.**

**4.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер. Доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидровибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7.ГРАВМАССУ, ПЕСОК, щебень, керамзит,** чернозём. Дёшево. Доставка. Т.: 8-903-358-17-70, 8-927-668-97-13, 38-97-13.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Дёшево. Доставка. Т.: 8-903-358-30-21, 44-30-21.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**15. Кирпич**, блоки. Т. 89613393363.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 89176757528.

**22.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 89278558355.**

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **колодезные кольца.** Доставка. Т. 8-903-346-85-56.

**29.Картофелекопалки,** косилки, **грабли,** пресс-подборщики, **плуги,** фрезы, погрузчики и другое. **ДОСТАВКА!** Т.: 8-937-375-80-95, 8-937-955-98-02.

**30.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**31.Гравмассу, песок, керамзит,** кирп. бой. Д-ка. Т. 89033225766.

**33.Кирпич** рядовой, лицевой; **керамблоки, кольца.** Доставка. Т.: 8-906-380-48-35, 8-927-667-46-05.

**35.**Пластиковые **ОКНА,** металлические **ДВЕРИ.** Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. **Рассрочка.** Скидки. Т. 8-937-391-39-91.

**37.**Ворота, калитки, **заборы,** навесы. **Ковка,** кровля, обшивка сайдингом. Общестроительные и сварочные работы. Замер. Д-ка. Установка. Гарантия. **Пенсионерам – скидки.** Т.: 8-902-288-14-47, 38-75-74, сайт:metalservis21.ru

**58.Гравмассу, щебень, песок, керамзит,** бетон, чернозём. Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**66.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Уч-м ВОВ и пенсионерам – **скидки.** Т. 89176769379.

**123.Гравмассу, песок, бетонные отходы, навоз.** Доставка по низким ценам. Т. 8-927-850-28-21.

**183.**Окна Чувашии. **ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, жел. двери.** Т. 89050281182.

**205.Цемент,** песок, **гравмассу,** щебень, **керамзит, блоки.** Д-ка. Т.: 89278497675, 89278497674.

**361.АКЦИЯ! КОЛЬЦА** железобетонные для колодцев и канализаций 0,7; 1; 1,5м. Бурение. Д-ка манипул-м. **Т. 8-960-307-31-51.**

**596.ТЕПЛИЦЫ** по ценам производителя. **Доставка. Сборка.** Т. 48-16-54.

**642.ТЕПЛИЦЫ** из поликарбоната, **ДВЕРИ** стальные, **ОКНА** ПВХ. От производителя. Скидки. Доставка по ЧР. Приглашаем оптовиков. Т. 8-927-667-62-02.

**648.Профнастил, металлочерепицу, сайдинг, водостоки.** Замер. Доставка. Скидки. Т. 89033220479.

**650.Тротуарную плитку, брусчатку.** Замер. Д-ка. Укладка. Скидки. Гарантия. Т. 89033220479.

### ТУЯНАТĂП КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-962-599-47-06.

**39.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**109.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 8-937-014-49-97.

**654.Скотину.** Т. 8-961-344-03-82.

### ПУЛĂШУ УСЛУГИ

**38.ЧИСТКА КОЛОДЦЕВ.** Т. 8-961-342-90-59.

**51.Бурение колодцев,** скважин, **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 89278477143, 89373790080.

**90.Бурение скважин** на воду "под ключ". **Т. 8-987-576-65-62.**

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

**246.Бурение скважин** на воду. **Чистка** старых **скважин.** Т. 8-906-381-60-37.

**649.Кровельные, фасадные работы.** Гарантия. **Т. 8-903-322-04-79.**

**657. Опытный юрист.** Т.89276678127.

### ĔÇ РАБОТА

**126. Монолитчики, плотники,** монтажники, шлифовщики, **каменщики, сварщики.** Питание, спецодежда. Вахта. Тел. 8-925-002-22-38.

**297.Требуются каменщики, монолитчики** в Москву. Оплата своевременная. Т. 8-962-321-70-11.

**653.**Для работы в Москве и Московской области **требуются рабочие следующих специальностей:** гипсокартонщики, штукатуры, маляры, столяры, плиточники, подсобные рабочие с зарплатой от 50 тысяч рублей. Контактный телефон 8-963-770-99-62, Алексей.

**668.** Для работы в Нижегородской области **ТРЕБУЮТСЯ РАЗНОРАБОЧИЕ.** Проживание в общежитии, 3-разовое питание. Оплата после вахты. ООО "Славия" Т. 8-906-133-67-72.

### ПАЛЛАШУ КĔТЕСĔ

Эпĕ 39 çулта. Ырă кăмăллă, ялти пурнăçа килĕштерекен хĕрпе е хĕрарăмпа паллашса çемье çавăрасшăн. **Т. 8-905-341-99-70, шăнкăравлăр.**

« ХЫПАР »
Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН “ХЫПАР” ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ” ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор В.В.ТУРКАЙ

Чăваш ХĔРАРĂМĔ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – М.Р.ТУМАЛАНОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев служби 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ
ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.
Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07
Электрон почти: hypar@mail.ru

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем “Реклама çинчен” Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **“Аталану çулĕпе”, “Ят-сум”, “Ĕç тата çын”, «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Номере 18.09.2015 алă пуснă. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 7929. Заказ 3628.